24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 ЯНВАРЬ 18 ВЫРСАРНИКУН 15(6040) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн резервӗсене куллен хатӗрлесе пымалла

Владимир Ильич Ленин 1917-мӗш ҫултах: «Хӗҫпӑшал тытма мӗнпур халӑхӑн вӗренмелле...» тесе ҫырнӑ. Халӑхсен пулшуҫӗ Ленин ӗҫҫыннисен кунҫулне витӗрех курса тӑнӑ; вӑл малтанах кӑтартса каланӑ сӑмахсем халӗ кашни ҫын обязательнӑй йӗркепе тумалли ӗҫ пулса тӑчӗҫ.

Пирӗн ҫуралантарас шутпа сӗмсӗрленсе килнӗ нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ совет халӑхӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ ҫӗршыв чыслӑхӗшӗн ҫапӑҫса тухрӗҫ. Сталин юлташ чӗннипе совет ҫӗршывӗнчи пӗтӗм халӑх хӑйӗн ӗҫне вӑрҫа май ҫӗнетсе урӑхлатрӗ, нимӗҫ оккупанчӗсене тӗп тума Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотне ӗҫлӗн, вӑйлӑн пулӑшма тытӑнчӗ.

Оборонӑн Государственный Комитечӗ хӗҫпӑшал тытма пултаракан мӗнпур совет ҫыннисене ҫар ӗҫне вӗренме, хӗҫпӑшала вӗренсе алла илме хушрӗ, пурне те обязательнӑй йӗркепе ҫар ӗҫне вӗрентесси ҫинчен постановлени кӑларчӗ. Вӑл постановление пурнӑҫлама тытӑннӑранпа улттӑмӗш уйӑх пырать ӗнтӗ. Ҫак уйӑхсем хушшинче ӗҫҫыннисем, производствӑра ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫленипе пӗрлех, вӗренӳ пункчӗсенче ҫар ӗҫне вӗренсе пычӗҫ.

Оборонӑн Государственный Комитечӗн постановленине пурнӑҫласа, халӑха ҫар ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе Чӑваш республикинчи ҫарӗҫ органӗсем пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗҫ. Парти тата совет организацийӗсем пулӑшнипе пур районсенче те вӗренӳ пункчӗсем организациленӗ, вӗсенче 110 сехетлӗ программа тӑрӑх вуншар пин ҫынсем ҫар ӗҫне пысӑк ҫӗкленӳпе вӗренеҫҫӗ. Ҫар ӗҫне вӗренесси кашни ҫыннӑн хальхи вӑхӑтри чыслӑ обязанноҫӗ пулса тӑчӗ. Ҫӗршер ҫамрӑк рабочисем, стахановецсем, производствӑра тимлӗн ӗҫленипе пӗрлех, ҫар ӗҫне вӗренсе Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑма хатӗрленеҫҫӗ.

Нумаях пулмасть Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисен пӗр ушкӑнӗ ҫар ӗҫне 110 сехетлӗ программа тӑрӑх вӗренсе пӗтерчӗ. Рабочисем, стахановецсем, ҫар ӗҫне отлично вӗренсе, снайперсем тата пулеметчиксем, танксене хирӗҫ кӗрешекенсем, стрелоксем пулчӗҫ. ВКП(б) Канаш райкомӗ халӑха ҫар ӗҫне вӗрентессине йӗркелесе пыма районри военкомата вӑйлӑн пулӑшса тӑрать. ВКП(б) райкомӗн секретарӗсем, вӗренӳ пункчӗсенче час-часах пулса, ҫар ӗҫне вӗрентес ӗҫпе интересленеҫҫӗ, ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшаҫҫӗ. Халӗ вагонсем юсакан заводри рабочисен тепӗр ушкӑнӗ ҫар ӗҫне вӗренме тытӑннӑ.

Ҫар ӗҫне вӗренессине Кувакино, Пӑрачкав, Шӑхасан, Первомайски тата ытти хӑшпӗр районсем те лайӑх организациленӗ. Кувакино районӗнчи ҫарӗҫ комиссариачӗ всевобуч командирӗсемпе политрукӗсен вӗренӳ ӗҫне лайӑх организациленӗ. Взвод тата отделени командирӗсене всевобуч боецӗсен занятийӗсене епле йӗркелемелли ҫинчен, вӗсен хӑйсен ҫар ӗҫне тарӑнраххӑн вӗренмелли ҫинчен инструкциллӗ занятисем 18 сехет хушши туса ирттернӗ. Нумайӗш командирсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе мухтава тивӗҫлӗн туса пыраҫҫӗ. Кувакино районӗнчи вӗренӳ пунктӗнчи пӗрремӗш взводӑн командирӗ И. Алешин юлташ занятисене тимлӗн хатӗрленсе ирттерет. Унӑн взводӗнчи боецсем отлично вӗренеҫҫӗ, дисциплинӑна яланах ҫирӗп тытаҫҫӗ. Алешин юлташ отделени командирӗсемпе нумай ӗҫлет, вӗсене занятисене ирттерме вӗрентет.

Ҫар ӗҫне вӗрентес ӗҫ Пӑрачкав районӗнче те лайӑх пырать. Ҫак иртнӗ кунсенче кунти вӗренӳ пункчӗсенчен танка хирӗҫ кӗрешекенсем вӗренсе тухрӗҫ. Всевобуч командирӗсем А. Горкин, И. Жидовиков, В. Яшин юлташсем ҫар техникине лайӑх вӗренсе ӳсее пыраканскерсем, всевобуч боецӗсене ҫар ӗҫне тимлӗн вӗрентеҫҫӗ. В. Яшин боецсене танксене хирӗҫ кӗрешмелли пур майсемпе те тимлӗн паллаштарчӗ. Унӑн боецӗсем ҫар ӗҫне отлично вӗренсе тухрӗҫ, Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑма хатӗр тӑраҫҫӗ.

Ҫар ӗҫне вӗренекенсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе нумай вӗренӳ пункчӗсенче лайӑх организациленӗ. Взводсенче, ротӑсенче политинформаторсем тӑтӑшах ӗҫлеҫҫӗ, стена хаҫачӗсем туха тӑраҫҫӗ. Кувакино районӗнчи вӗренӳ пункчӗсенче иртнӗ кунсенче С. М. Киров пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен, Сталинла Конституци ҫинчен, Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсем ҫинчен тата ытти ҫинчен те докладсемпе калаҫусем туса ирттернӗ. Анчах халӑха ҫар ӗҫне вӗрентсе Хӗрлӗ Ҫарӑн резервӗсене хатӗрлес ӗҫ республикӑра пур ҫӗрте те ҫителӗклӗ пулса тымасть-ха.

Уйрӑмах Вӑрнар районӗнче ҫак ӗҫ начар тӑрать. Организациленӗ пунктсенчен пӗр пункчӗ ҫеҫ ӗҫлет. Ытти вӗренӳ пункчӗсенче октябрь уйӑхӗнчен вара занятисем ирттерме пӑрахнӑ. Кунти организацисем Оборонӑн Государственный Комитечӗн ҫак питӗ те кирлӗ постановленийӗн пысӑк пӗлтерӗшне ӑнланса илмен, ӑна пурнӑҫа кӗртес ӗҫре хӑйсен ответлӑхне туйса тӑман. Вӗсем вӗренӳ пункчӗсен ӗҫӗсене, вӗренӳ пахалӑхне тӗрӗслесе тӑман. Ҫакна пула вӗренӳ пункчӗсен начальникӗсем боецсене ҫар ӗҫне вӗрентессине ҫиелтен ҫеҫ туса пынӑ.

ВКП(б) Обкомӗ партин Вӑрнар райкомне ҫар ӗҫне вӗрентессине районра халех лайӑхлатма хушрӗ. Всевобуч политработникӗсене ҫителӗклӗ таран уйӑрса лартма хушрӗ.

Оборонӑн Государственный Комитечӗн пурне те обязательнӑй йӗркепе ҫар ӗҫне вӗрентесси ҫинчен калакан постановленине пурнӑҫлас тӗлӗшпе партипе совет организацийӗсен активлӑн ӗҫлемелле. Всевобуч боецӗсем мӗнле вӗреннине тӗрӗслесе тӑмалла, вӗренме майсем туса памалла. Анчах нумай совет организацийӗсем, ҫавӑн пекех хӑшпӗр ҫӗрти парторганизацисем те, ҫак ответлӑ ӗҫе йӑлтах военкоматсем ҫине йӑвантарнӑ. Хӑшпӗр ҫӗрте боецсем вӗренӗве кая юлса пыни е вӗсене субботниксене илсе кайса вӗренӳрен тӑрнисем пулкалаҫҫӗ. Ҫакӑн пек тӗслӗхсем ҫар ӗҫне вӗренессине хакламаннине кӑтартса параҫҫӗ.

Халиччен вӗреннине ҫирӗплетсе хӑварас тӗлӗшпе тата вӗренӳ пахалӑхне тӗрӗслес шутпа ҫак уйӑхсенче вӗренӳ пункчӗсемпе учебнӑй заведенисенче ҫар ӗҫне вӗренекен боецсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне организацилемелле. Вӑл ӑмӑрту Оборонӑн Государственный Комитечӗн постановленине эпир мӗнле пурнӑҫласа пынине лайӑх кӑтартса парӗ. Ҫавӑнпа вӗренӳ пункчӗсен ӗҫӗнчи хӑвӑртлӑхсене ӳстермелле. Парти, комсомол тата профсоюз организацийӗсен руководителӗсен ҫак ӑмӑртӑва хатӗрленме пулӑшмалла. Ӑмӑртӑва хутшӑнма всевобуч боецӗсене мобилизацилемелле.

Вӗренӳ пункчӗсен ӗҫне тӗпренех лайӑхлатмалла, ҫар ӗҫне пурне те куллен вӗрентсе, Хӗрлӗ Ҫарӑн боевой резервӗсене хатӗрлемелле. Хӗрлӗ Ҫар ретне пысӑк пӗлӳллӗ, сывлӑхлӑ, дисциплинӑллӑ боецсем пырса тӑччӑр.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составне орденсемпе тата медальсемпе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене наградӑлас:

ХӖРЛӖ ЯЛАВ ОРДЕНӖПЕ

1. Полковника Иван Данилович **Черняховские.**

ХӖРЛӖ ҪАЛТӐР ОРДЕНӖПЕ

1. Батальоннӑй комиссара Тимофей Никанорович **Косицына.**
2. Технически войскӑсен генерал-майорне Дмитрий Александрович **Лебедева.**
3. Полковника Петр Андреевич **Морозова.**

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» МЕДАЛЬПЕ

1. Батальоннӑй комиссара Николай Николаевич **Сафонова.**
2. Полковой комиссара Константин Петрович **Трепетцова.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

Выигрыш укҫине тӳлеҫҫӗ

ШӐХАСАН. Ӗҫҫыннисем кулленех хӑйсем ҫырӑнса илнӗ заем облигацийӗсем ҫине выигрышсем тухнине перекет кассине пырса тӗрӗслеттереҫҫӗ. 1941 ҫулта Шӑхасан районӗнчи перекет касси заем облигацийӗсем ҫине тухнӑ выигрышсене ӗҫҫыннисене 42.780 тенкӗ укҫа тӳленӗ.

Ӗҫҫыннисем нумайӗшӗсем заем облигацийӗсемпе выляса илнӗ укҫасене оборона фондне, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тунӑ ҫӗре параҫҫӗ.

В. ЯКОВЛЕВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсене орденсемпе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫак чаҫӗсене наградӑлас:

ЛЕНИН ОРДЕНӖПЕ

205-мӗш стрелковӑй полка.

ХӖРЛӖ ЯЛАВ ОРДЕНӖПЕ

1. **58-мӗш стрелковӑй полка**
2. **Зенитнӑй артиллерин 314-мӗш уйрӑм дивизионне.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
Хӗрлӗ Ҫарӑн сывлӑш-ҫар вӑйӗсенчи летчиксене Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене, **Ленин орденӗпе «Золотая Звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Кӗҫӗн лейтенанта Иван Петрович **Грачева.**
2. Сержанта Назар Петрович **Губина.**
3. Лейтенанта Семен Кириллович **Косинова.**
4. Кӗҫӗн лейтенанта Егор Павлович **Новикова.**
5. Капитана Георгий Георгиевич **Петрова.**
6. Старший лейтенанта Алексей Николаевич **Сторожакова.**
7. Кӗҫӗн лейтенанта Иван Сергеевич **Черныха.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
С. В. Василисин политрука тата М. П. Краснолуцкий майора Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн, **Ленин орденӗпе «Золотая Звезда»** медалӗ парса, **Совет Союз Геройӗн** званине ҫак ҫынсене парас:

1. Политрука Сергей Васильевич **Василисина.**
2. Майора Митрофан Петрович **Краснолуцкие.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
Батальоннӑй комиссара Г. А. Таряника Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн батальоннӑй комиссара Григорий Аверьянович **Таряника, Ленин орденӗпе «Золотая Звезда»** медалӗ парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составне орденсемпе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене наградӑлас:

ЛЕНИН ОРДЕНӖПЕ

1. Полковника Моисей Григорьевич **Гривнина.**
2. Генерал-майора Андрей Иванович **Зеленцова.**

ХӖРЛӖ ЯЛАВ ОРДЕНӖПЕ

1. Бригаднӑй комиссара Михаил Федорович **Башкатова.**
2. Бригаднӑй комиссара Николай Николаевич **Клочева.**
3. Батальоннӑй комиссара Виктор Иванович **Макарова.**
4. Батальоннӑй комиссара Николай Михайлович **Михайлова.**
5. Старший батальоннӑй комиссара Сергей Петрович **Носкова.**
6. Батальоннӑй комиссара Анатолий Иванович **Седалищева.**
7. Майора Иван Тимофеевич **Сиверса.**
8. Полковника Александр Васильевич **Степанова.**
9. Старший батальоннӑй комиссара Петр Емельянович **Чурмаева.**
10. Генерал-майор Петр Семенович **Шевченкӑна.**

ХӖРЛӖ ҪАЛТӐР ОРДЕНӖПЕ

1. Батальоннӑй комиссара Борис Наумович **Клубта.**
2. Батальоннӑй комиссара Исаак Федорович **Купервацкие.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

СССР ВЕРХОЗНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН
УКАЗӖ
П. Ф. Москвитин генерал-майора Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Петр Федорович **Москвитин** генерал-майора **Хӗрлӗ Ялав орденӗпе** наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 16-мӗш.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 16-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 16-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем малалла куҫса пынӑ, нимӗҫсен фашистла войскисем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗре-ҫӗмӗре тӑкнӑ. Уйрӑм участоксенче противник контратакӑсем туса пӑхнӑ, ҫав контратакӑсене противника пысӑк ҫухатусем кӳрсе сире-сире пӑрахнӑ. Пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ.

Январӗн 15-мӗшӗнче нимӗҫсенне 45 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 14 самолет пӗтнӗ.

* * *

Январӗн 15-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсенне 6 танк, пехотӑпа грузсем турттарса пыракан 155 автомашинӑна, боеприпассем тиенӗ 70 лава яхӑн, горючи тултарнӑ 5 автоцистернӑна пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул кӗперне ишӗлтернӗ, боеприпассен 2 складне тата горючин пӗр складне вут тивертнӗ, противник пехотин 6 батальонне сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Кузнецов юлташӑн боецӗсем (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) пӗр кун хушшинче тӑшманӑнне 4 танк пӗтерсе тӑкнӑ тата 5 орудие, 5 пулемет, 60 автомашина тата ытти тӗрлӗ трофейӑсем тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн стрелковӑй часть противник пехотин икӗ ротине пӗтерсе тӑкнӑ тата боеприпассемпе снаряжени тиенӗ пысӑк обоз, пӗр танк, танксене хирӗҫ пемелли 4 пӑшал, темиҫе пулеметпа автомат тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ Киров хулинче пирӗн чаҫсем тӑшманӑнне 36 паровоз, 1100 вагон, 56 платформа, вӑл шутра салатнӑ самолетсен пайӗсене тиенӗ 7 платформа, боеприпассем тиенӗ 25 вагон тата ытти нумай тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче гитлеровецсем, ҫӗнӗрен пулӑшу илсе, контратака тума тытӑннӑ. Пирӗн часть пулеметсемпе минометсенчен персе вӗсене чарса тӑнӑ, унтан вара тӑшмана флангсенчен аркатса тӑкмаллах пырса ҫапнӑ. Гитлеровецсем, ҫапӑҫу хирӗнче хӑйсен 300 виллине пӑрахса хӑварса, нимӗн йӗркесӗр каялла чакнӑ. Чакакан противника йӗрлесе хӑваласа пырса, пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан пӗр пункта йышӑнса илнӗ.

* * *

Совет разведчикӗсен Гордюков капитан пуҫпулса тӑракан групни М. ялӗ ҫине хӑюллӑн пырса тапӑннӑ. Кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннипе пула нимӗҫсем, ҫапӑҫу хирне хӑйсен салтакӗсен 20 виллине, 2 минометпа 30 винтовка пӑрахса хӑварса, ялтан тухса тарнӑ.

* * *

Кӗҫӗн командир Пухальский ертсе пыракан автоматчик-кавалеристсен взвочӗ Малиновка ялӗнчи урамри ҫапӑҫусенче тӑшман пехотин ротине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Карели вӑрмӑнӗсенче М. юлташӑн партизанла отрячӗ белофинн бандичӗсене хастарлӑн ҫапа-ҫапа ҫӗмӗрет. Ҫак кунсенче партизансем пӗр ҫул ҫинче засада тунӑ та темиҫе сехет хушшинче тӑшманӑнне тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ тиенӗ 4 автомашина, пӗр бронемашина пӗтерсе тӑкнӑ, финсемпе нимӗҫсене 46 ҫынна, вӑл шутра 3 офицера, вӗлернӗ.

* * *

Ҫӗнӗ ҫул ыран тенӗ чухне нимӗҫсен обер-ефрейторӗ Фриц Лейтман хӑйӗн пиччӗшӗ патне ҫапла ҫырнӑ: «Эсӗ илтнӗ пулӗ, вырӑссем фронтӑн вӑтаҫӗрти участокне татса кӗчӗҫ. Ҫакӑ вӑл пӑпах пирӗн тӗлте пулчӗ. Вӗсем мӗнпур орудисене тытса илчӗҫ. Пирӗннисенчен нумайӗшӗсем пӗтрӗҫ. Ку вӑл питех те салхуллӑ картина пулчӗ. Пирӗн 15-мӗш дивизие пӗтӗмӗшпех ҫапса аркатрӗҫ. Эпир каялла чакса пыратпӑр. Ыран акӑ ҫӗнӗ ҫул, манӑн, вырӑс пульлисенчен мӗнле те пулин сыхланса юлас тесе, тарӑн юр ӑшӗнче 4 сехет ытла выртма лекрӗ. Эпир пӗчӗк ушкӑнпа кӑна тӑрса юлтӑмӑр».

Нимӗҫсен 502-мӗш строительнӑй батальонӗн 3-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эрих Фридикейт ҫапла каласа панӑ: «Юлашки шартлама сивӗсем батальонри мӗнпур салтаксене сиенлерӗҫ. Пирӗнтен кашнинне мӗн те пулин тӑм илсе янӑ: алӑ е ура пӳрнисене, хӑлхине е сӑмсине. Старая Русса районӗнче эпӗ вырӑссем ҫапса аркатнӑ противотанковӑй батарейӑна куртӑм, унта 8—10 ҫын тӑрса юлнӑ. Ҫавӑнтах нимӗҫсен питех те вӑйлӑн арканнӑ 135-мӗш артполкӗ тӑрать, ҫав полкра пӗтӗмпе те темиҫе орудие кӑна сыхланса юлнӑ».

* * *

Хӑйсене Италире ҫӗнтерсе илнӗ ҫӗршывра тыткаланӑ пек тыткалакан нимӗҫсене Итали халӑхӗ кураймасть. Модика хулинче (Италия) январӗн 11-мӗшӗнче нимӗҫсен салтакӗсем вырнаҫса тӑракан казармӑна ҫӗрле гранатӑсен ҫыххи пӑрахнӑ. Взрыв пулнипе 17 гитлеровец пӗтнӗ. Январӗн 9-мӗшӗнче ҫаз хула хӗрринче нимӗҫ летчикӗсен общежитийӗ ҫунса кайнӑ тата антар ишӗлсе аннӑ, унта Германин темиҫе самолечӗ пулнӑ.

* * *

Лейпциг хулинче (Германия) военно-полевой суд нимӗҫсен 8 салтакне вӗсем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне каясси нчен пӑрӑннӑшӑн персе пӑрахмалла приговор йышӑннӑ.

* * *

Кузнецк заводӗнчи листопрокатчиксем продукци туса кӑларассине кунран-кун вӑйлатса пыраҫҫӗ. Январӗн 2-мӗш пилӗккунлӑхӗнче вӗсем заданирен ирттерсе пиншер тонна метал панӑ. Январӗн 9-мӗшӗнче цех плана—138,5 процент, январӗн 10-мӗшӗнче 149,7 процент тултарнӑ.

Январӗн 17-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 17-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ активлӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Ефремов юлташӑн чаҫӗсем (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсенне 4 танк, 4 орудие, 6 миномет, 70 велосипед, автоматсем, винтовкӑсем тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Тепӗр участокра Говоров юлташӑн чаҫӗсем, чакакан противника хыҫран хӑваласа пырса, тӑшманӑнне 5 танк, 166 пулемет, танксене хирӗҫ пемелли 45 пӑшал, 23 миномет, 11 зенитнӑй установка, 13 орудие тата 1.094 винтовка тытса илнӗ. Тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене тыткӑна илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть, тӑшмана питӗ хӑвӑрт пырса ҫапса, халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ. Урамсенчи ҫапӑҫусенче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 350 ҫын виллӗ. Пирӗн боецсем нимӗҫсенне 2 танкетка, 5 орудие, 11 пулемет, 4 миномет тата нумай боеприпассем тытса илнӗ.

* * *

Кисимов красноармеец, противникӑн чакакан обозне хӑваласа пырса, винтовкӑран тӗл персе тӑшманӑн 10 салтакне вӗлернӗ тата 6 лавне гранатӑпа пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен П. юлташӑн партизанла отрячӗ чугунҫул станцийӗ ҫине пырса тапӑннӑ. Отрядӑн боецӗсем нимӗҫсен 22 салтакне вӗлерсе пӗтерсе, чугунҫул ҫине минӑсем лартса хӑварнӑ. Чугунҫулӑн минӑсем лартнӑ участокӗнче вӑрҫӑ грузӗсене тиенӗ ҫар эшелонӗ тата ҫул юсама янӑ поезд сирпӗнсе кайнӑ.

* * *

Ленинград фронтӗнчи участоксенчен пӗринче нимӗҫсен 93-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 271-мӗш пехотнӑй полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Рихард Зейли ҫапла каласа панӑ: «5-мӗш ротӑн личнӑй составӗнчен халӗ 50 процент та аран-аран тӑрса юлнӑ. Ытти ротӑсенче те лару-тӑру ҫавӑн пекех. Салтаксен шухӑш-кӑмӑлӗсем питӗ начар. Вӗсен килӗсене тавӑранас шанчӑкӗ питӗ сахал. К. районӗнче тӑнӑ чухне 5-мӗш рота контратакӑна кайма килӗшмен, вара салтаксене персе пӑрахассипе хӑратса ҫеҫ командованин хӑйӗн приказне пурнӑҫа кӗртме май килнӗ. 7-мӗш ротӑра темиҫе салтак Хӗрлӗ Ҫар енне куҫма хӑтланса пӑхнӑ, анчах та вӗсене Петровское ялӗ патӗнче тытнӑ та персе пӑрахнӑ. Ротӑсене вӗрентсе хатӗрлемен, опытсӑр резервистсем хушса параҫҫӗ. Сывмаррисем те пур. Нумаях та пулмасть пирӗн ротӑна пысӑк куҫлӑ икӗ салтак ярса панӑ. Декабрь уйӑхӗнче эпӗ Берлинран, хамӑн аннерен ҫыру илтӗм. Вӑл: ҫак пысӑк хулара траурлӑ тум тӑхӑнса ҫӳремен хӗрарӑма сайра хутра ҫеҫ курма пулать, тесе ҫырать».

* * *

Нимӗҫ унтер-офицерӗ Карл Кремер ҫумӗнче Нассауран, хӑйӗн арӑмӗ патӗнчен илнӗ ҫыру тупнӑ. Ытти ҫӗнӗ хыпарсемпе пӗрлех вӑл упӑшки патне ҫапла ҫырать: «Паян Нассауна аманнисене тата 170 ҫын илсе килчӗҫ. Вӗсем пурте стариксем пекех пулса кайнӑ. Ҫакӑн пеккине курсан, ҫан-ҫурӑм сӑрлатсах каять...»

* * *

Тула облаҫӗн Волово районӗнчи Н-Большое ялӗнче гитлерла мерзавецсем пӗр ҫурта колхозниксемпе аманнӑ красноармеецсене 56 ҫынна хупса лартнӑ та, краҫҫын сапса, ҫуртне вут тивертсе янӑ. Хупса лартнӑ ҫынсем пурте ҫунса кайнӑ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Феодосия хулине десант антарни

Декабрĕн 29—30-мĕш числисенче Кавказ фрончĕн войскисемпе Хура тинĕс флотĕн морякĕсем Феодосия хулине десант антарнă. Аяларах эпир çак питех те чаплă операцие мĕнле ирттерни çинчен тĕплĕрехĕн çырса пĕлтеретпĕр.

Сĕм-тĕттĕм çĕрле крейсер Крым çыранĕсем патне пырса çитнĕ. Малтамол патĕнче, портри складсем умĕнче, хулана гаваньрен уйăрса тăракан кирпĕч хӳме умĕнче, пĕчĕк вут çутисем мĕлтлетни курăнать. Унта капитан-лейтенант Иванов командир пулса ертсе пыракан катерсем çинчи боецсем, тăшман çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, ăна хирĕç хăюллăн çапăçма пуçланă иккен. Вĕсем портăн тĕрлĕ кĕтессисенчен типĕ çĕр çине аннă та тĕлĕрсе кайнă заставăна пĕтерсе тăкнă, унтан, сухалса кайнă автоматчиксем нимĕн тĕлли-паллисĕр персе тăнине пăхмасăрах, складсем патнелле çĕмĕрсе кĕрсе кайнă.

Крейсер çинчен орудисем залпсемпе пеме пуçланă. Акă хула çийĕн снарядсем шăхăрса иртеççĕ, таçта лере, тусем хушшинче, хĕрлĕ вут çулăмĕсем сирпĕнсе çĕкленеççĕ. Унта нимĕç батарейисем пытанса ларнă. Иккĕмĕш залп, ун хыççăн виççĕмĕш залп янраса кайрĕ. Пирĕн краснофлотецсем, крейсерăн шăнса пасарнă карлăкĕсенчен тыткаласа, пăрланса ларнă трапсем тăрăх шăва-шăва анса, çыран хĕррине тухма тытăнчĕç. Старший лейтенант Эйдиновăн морякĕсем ку вăхăтра порт территорине çитнĕ те, кашни пакгаузшăн паттăррăн çапăçма пуçланă. Портăн паспа витĕнне çӳлĕ хӳмисем çумĕнче пĕр ротăна яхăн нимĕç автоматчикĕсем пытанса ларнă пулнă. Вĕсем крейсерпа хула хушшинчи çул талкĕшпех персе тăраççĕ.

Нимĕçсем пытанса ларнă хӳмене штурмлама пирĕн моряксем ыткăнса кĕрсе кайрĕç. Вĕсем тăшман вут-хĕмĕ витĕрех малалла çĕмĕрсе кĕреççĕ, ӳкеççĕ, тăраççĕ, унтан татах малалла ыткăнаççĕ, винтовкисемпе гранатисене хатĕр тытса, тăшман патнелле хырăмпа шуса çывхарса пыраççĕ. Взвод командирĕн помощникĕ Сделано юлташ хӳме патне пысăк тимĕр пичке кустарса килчĕ те, ун çине улăхса тăрса, татти-сыпписĕр шăхăракан пульăсем айĕпех хӳмен тепĕр енне темиçе граната ывăтрĕ. Ытти моряксем те, пичке çине улăхса тăрса, тăшман çине гранатăсем вăркăнтарма пуçларĕç. Хӳмен леш енче шупка-кăвакрах вут çутисем йăлтлатма тытăнчĕç, аманнă нимĕçсем кăшкăрашса йынăшнисем илтĕнсе кайрĕç. Пирĕн артиллери тусем хушшине персе тăрать. Тăшман снарячĕсем пуç урлă шăхăрса иртеççĕ, анчах вĕсенчен нумайĕшĕсем шыва пыра-пыра ӳкеççĕ. Çапах та тăшман орудийĕсем крейсер çине тĕллесе пеме тытăнчĕç. Çавăн пирки команда снарядсене, боеприпассем тултарнă ещĕксене, автомобильсене крейсер çинчен пушатма пуçларĕ. Халĕ ĕнтĕ снарядсем гавань хӳми çумнех киле-киле ӳкеççĕ, темиçе снарячĕ крейсер аяккине пырса тивсе шăтарчĕ. Пирĕн краснофлотецсем снаряд шăтăкĕсене хăвăрт кăна питĕрсе хучĕç те татах крейсер çинчи винтовкăсене, пулеметсене, минăсене çыран хĕррине пушатма тытăнчĕç.

Портшăн пыракан çапăçу чи хĕрсе çитнĕ самантра, нимĕçсем халран кайма пуçланипе йĕркесĕррĕн перкелешсе çывăхри урама куçма пуçланă чухне, Феодосия гаванĕ патне транспортсемпе пирĕн войскăсем килсе çитрĕç. Сĕм тĕттĕм витĕр, артиллери вут-хĕмĕ айĕн, автоматчиксем персе тăнине пăхмасăрах, майор Андреев подразделенийĕн боецĕсем пĕчĕк ушкăнсемпе çыран хĕррине тухрĕç. Вĕсем çавăнтах çыран хĕррине улăхса çапăçма хатĕрленсе йĕркеленчĕç. Андреев подразделенийĕн боецĕсем пурте çыран хĕррине питĕ хăвăрт, нимĕн пăтранмасăр, пĕр çухатусăр тенĕ пек тухса çитрĕç те: «Урра, Крым пирĕн алăра!» тесе кăшкăрса, хулана штурмласа кĕрсе кайрĕç.

Тул çутăлма пуçларĕ. Майор Андреевăн часĕ çĕнĕрен-çĕнĕ позицисем йышăнать. Фронт линийĕ хула çумнелле куçрĕ. Нимĕçсем шăлтах вăйсăрланса çитрĕç, урам хыççăн урам пăрахса хăварма пуçларĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн красноармеецсемпе краснофлотецсем тăшмана хăйсен умĕнче кураймаççĕ, çапах та тăшман красноармеецсемпе краснофлотецсем çине чердаксем çинчен, чӳречисенчен, подвалсенчен, килкартисенчен сумăр çутарнă пекех персе тăрать-ха. Çапăçу çивĕчленсе çитрĕ, урăх формăна куçрĕ. Тăшмана кашни хушăкран, кашни урамран, кашни çуртран, сарайран хĕссе кăлармалла. Боецсем тăшман вут-хĕмĕ çинех пыра-пыра кĕреççĕ, кашни çурта пырса кĕрсе, картишсенче, садсенче ухтарса çӳреççĕ, автоматчиксене пĕтере-пĕтере пыраççĕ, «малалла!» тесе кăшкăрса, хулашăн çапăçаççĕ.

Красноармеец Баташов, темиçе кас çывăрманнипе куçĕсем хĕрелсе кайнă пулин те, портшăн çапăçнипех те самаях ывăннине пăхмасăрах, чердаксем çине улăхса кайса тустарса çӳрет, унта нимĕçсене тыта-тыта вĕлерет, вĕсене çĕре тĕрте-тĕрте йăвантарать, вилекен тăшманăн шăписене тултарать. Баташов ертсе пыракан пĕчĕк отрядăн боецĕсем хăраса ӳкнĕ çатта-çарамас офицерсене сысна витисенчен сĕтĕресĕтĕре кăларать. Вĕсен аллисене хыçалалла туртса çыхса, урама, полк командирĕ патне сĕтĕрсе илсе каять. Старшина Грицын, ĕлĕк кавалерист пулнăскер, клинокне халĕ те хăйĕнчен хăварман. Вăл урамсем тăрăх таракан фашистсене хăваласа çитсе тăваттăшне клинокпа тураса тăкрĕ, саккăрăшне штыкпа чиксе пăрахрĕ.

Кĕçĕн лейтенант Тархун тинĕс хĕрринчи башня тăрринче автоматчик ларнине курнă. Тархун çав автоматчик патне улăхма шут тытнă. Йăпăлка тимĕр картлашкасем тăрăх вăл башньăн чи çӳллĕ тăрринех улăхса çитнĕ те, вилесрен хăрамасăр, нимĕç ефрейторĕпе çапăçу пуçласа янă. Тархун нимĕç ефрейторне сывлăш çавăрма та паман, çавăнтах пĕтерсе тăкнă.

Çак вăхăтра сулахай флангра нимĕçсем пирĕн тупă тăнине асăрханă та ун çине çĕмĕрсе кĕме тытăнчĕç. Оруди командирĕ, кĕçĕн сержант, оруди расчетĕнчен пилĕк çын илсе, тăшман çине атакăпа кĕрсе кайрĕ. Оруди патне Благоречнăйпа Лунин юлташсем çеç тăрса юлчĕç. Вĕсем, иккĕн çеç юлнă пулин те, орудирен пĕр вĕçĕмсĕрех персе тăраççĕ, снарядсем тăшман çине тĕл пырса ӳкнипе савăнаççĕ. Çак тытăçу 20 минута тăсăлчĕ. Нимĕçсем, пирĕн чассем хĕснине чăтаймасăр, тухса тарчĕç, анчах çак çапăçура Лунин паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хучĕ, Благоречный юлташ аманчĕ.

Феодосия урамĕсем хушшинче çапăçу нумайччен пычĕ. Хула тăрăх фашистсен виллисем йăваланса выртаççĕ. Аллисене уçса хунă çăмăл автомашинăсем, юр ăшне шăнса ларнăскерсем, çаплипех ларса юлнă: офицерсем вĕсен моторĕсене ăшăтса ĕçе ярайман пирки çаплипех пăрахса хăварнă.

Кас пуласпа, вăйсем пирĕн енче иккене уççăнах палăртнă хыççăн порт çывăхĕнчи урамсемпе тĕп площадьсене пирĕн войскăсем çапăçса тытса илсен, нимĕçсем каялла çавăрăнса пăхмасăрах хуларан тухса тарма пуçларĕç. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем кăна, магазинсенче, çурт тăррисенче, хушăксенче пытанса ларса, перкелесе тăчĕç, анчах пирĕн боецсем пырса çитсенех вĕсем аллисене çӳлелле çĕклесе: «Рус, сдаю, жить хочу!» тесе тилмĕрме тытăнаççĕ.

Кăнтăрла та, каçхине те, çĕрле те çĕрĕпе тенĕ пекех Феодосия çинче пăшалсемпе оруди сассисем кĕрлесе тăчĕç. Фронт линийĕ хула чиккинчен хĕвеланăçнелле куçса кайрĕ. Çĕрĕ-çĕрĕпех пирĕн транспортсем гаване войскăсемпе боеприпассем турттарса тăчĕç. Хула çинче нумайччен артиллери снарячĕсен çулăмĕсем ялкăшрĕç.

М. МЕРЖАНОВ.
(«Правда», январĕн 15-мĕш).

Чăваш боецĕсем фронтра

Эпир, Н-ски часри чăваш красноармеецсемпе командирсем, хамăрăн тăван çĕршывшăн пыракан çапăçура нимĕç йытисене хирĕç пĕтĕм вăй хурса кĕрешетпĕр. Вăрçă кунĕсем пуçланни чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Çак кунсенче чăвашсем хăйсен пултарулăхĕсемпе паттăрлăхĕсене сахал мар кăтартрĕç.

Акă, сержант С. Музяков ертсе пыракан отделенине батальон командирĕ И. хули патĕнчи кĕпере сирпĕнтерме задани пачĕ.

Вĕсем кайсанах, нимĕçсем пирĕ пур енчен те хупăрласа килме тытăннă пирки, Музяков отделенийĕ фашистсен аллине лекнĕ пулĕ тесе шикленме пуçларăмăр... Икĕ кун иртнĕ хыççăн вĕсем çавăрăнса çитрĕç. Боецсем пурте çурăмсем хыçне нимĕçсенчен туртса илнĕ вăрçă хатĕрĕсене çакнă.

— Ну, мĕнле, Музяков юлташ, кĕперпе сывпуллашрăр-и? — тесе ыйтрĕ комбат.

— Сывпуллашрăмăр. Кĕперпе пĕрле нимĕçсен пĕр танкĕ шыва путрĕ, ыттисем, сахăрĕш, каялла тĕртрĕç. Килме тухсан, нимĕçсен шăнса кайнă ултă автоматчикĕ курупунĕсене кăларса пĕр пӳрте кĕрсе кайнине курсан, вĕсем çине çассăнтах 2 граната ывăтрăмăр. Çак сасса илтсе, пирĕнтен пĕр 100 метрта пулемет шатăртатма тытăнчĕ. Анчах пулеметчик ниме пĕлмесĕр вăрман çинелле пеннине курсан, ман икĕ боец штыксемпе пулеметчике çавăнтах чарса лартрĕç. Ак вĕсен вăрçă хатĕрĕсем,—тесе, сурăнланнă аллипе 6 автомата пĕр пулемет çине тĕллесе кăтартрĕ Музяков.

Кĕçĕн сержант Д. Горшков хăйĕн отделенийĕпе фашистсене хирĕç пĕр хăрамасăр кĕрешет.

Çапла, пĕринче П. ялĕ çывăхĕнче татăлнă çыхăнăва тӳрлетме Горшков отделенине приказ илнĕ хыççăн тăватă боец ĕçе тытăннă. Сывлăша артиллерирен пенĕ снарядсем кисретсе тăнă.

— Сержант юлташ! Фашистсем! — кăшкăрчĕ связист Иванов.

Вунă-вунпилĕк минутăран нимĕç чĕлхипе:

— Хальт! Хальт! Рус, сдавайся! — тенĕ сасăсем янраса кайрĕç. Хăйсем хăранăскерсем пулнă пулмалла, автоматран пирĕн çинелле йĕрсĕр пеме пуçларĕç.

— Выртăр! — команда пачĕ сержант. Вĕсем çине ывăтнă граната фашистсене автомачĕпе пĕрлех лăплантарчĕ. Пирĕн гранатăсем çурăлнă вырăнта фашистсен 5 салтакĕ вилнĕ, тăваттăшĕ йывăр аманнă.

Часа пурсăмăр та сывах таврăнтăмăр. Нимĕçсенчен 3 автомат, 2 пулемет, 2 винтовка, 3 патрон ещĕкĕ туртса илтĕмĕр. Çыхăнăва та часах йĕркене кĕртрĕмĕр.

Çавăн пекех чассенчен пĕринче взвод командирĕ К. Арсентьев та боецсем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать.

Оборона линине çирĕплетме панă приказа пурнăçа кĕртнĕ хыççăн отделени командирĕ боецсене землянкăна канма илсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, минăсемпе снарядсем татах çурăлма пуçларĕç. Постра тăракан боец часах мина провода татни çинчен пĕлтерчĕ.

Хăрушлăха пăхмасăрах, Арсентьев проводсене çыхăнтарма тухса кайрĕ. Вăл хырăмпа шуса провод татăкĕсене 8 çĕртен сыпăнтарса, землянкăна нимĕн сиенленмесĕр таврăнчĕ.

Арсентьев, Музяков, Горшков пек боецсем фронтра çапăçакан чăвашсем хушшинче темиçе çĕршерĕн хисепленеççĕ. Пурте вĕсем тăшмана хирĕç пĕтĕм хаярлăхпа çапăçаççĕ.

Ф. КВАСОВ,
Л. АНТОНОВ,
НИКОЛАЕВ.

Действующи арми.

Йĕлтĕрçĕ ăсталăхне лайăх вĕренмелле

КАЛИНИНО. Профсоюзпа комсомолăн районри пуçламĕш организацийĕсем йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленеççĕ. Çак ĕç Калининăри вĕренӳ пунктĕнчи всевобуч боецĕсем хушшинче уйрăмах ăнăçлăн пырать. Йĕлтĕрпе çӳреме лайăх пĕлни тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте пысăк усă панине вĕсем тĕрĕс ăнланса илнĕ. Çавăнпа та вĕсем йĕлтĕрлĕ походсене пысăк хаваслăхпа ирттереççĕ.

Январĕн 7-мĕш. Хĕвеланăç енчен сиввĕ çил вĕрет, ăçта килчĕ унта карта юписемпе çуртсем хушăкĕсенчен шăхăрса иртет. Уйра куç уçса пăхмалла мар юр вĕçтерет. Анчах всевобуч боецĕсем чăтăмлă. Вĕсем çакнашкал çанталăкрах пĕр сехет хушшинче 12 километрлă похода кайса килчĕç. Хаваслăх кăна палăрать вĕсен сăн-пичĕсенче.

— Паян эпир всевобуч боецĕсем, ыран акă, Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсен ретне тăрса, нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçма каятпăр. Çавăнпа та йĕлтĕрпе çӳреме пирĕн питĕ лайăх пĕлмелле, — тет боец-учитель Сергей Ефимов.

Вĕренӳ пунктĕнче кроса лайăх хатĕрленсе ирттерессишĕн отделенипе отделени, боецсемпе боецсем хушшинче ăмăрту пырать.

Йĕлтĕрлĕ кроса ирттерме хатĕрленес ĕçе Уйкас Юнтапари вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем те хĕрӳллĕн тытăннă. Кунта 6 команда организациленĕ тата вĕсен командирĕсене çирĕплетнĕ. Шкулăн кроса хатĕрленме 30 мăшăр тата вĕренекенсен хăйсен 70 мăшăр йĕлтĕр пур. Вĕсемпе лайăх усă кураççĕ. Халĕ, кроса хатĕрленнĕ май, учительсемпе вĕренекенсем, йĕлтĕрсем çине тăрса, тĕрлĕрен чăрмавлă вырăнсенче çӳреме хăнăхаççĕ, чăнкă çырансенчен сикме, ярăнса анма тата хăпарма, тарăн юр кукисем урлă каçма, йĕлтĕрпе туясăр чупма вĕренеççĕ тата ытти енĕпе те тренировкăсем туса ирттереççĕ, 10—12 километрлă походсене кайса килеççĕ.

Калинино вăтам шкулĕнчи военрук Горшков юлташ шкулта çар ĕçне вĕрентессине профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленессипе çыхăнтарать. Вĕренекенсем йывăçран кĕрепе, граната тата винтовка макечĕсем тунă. Йĕлтĕрлĕ походсене кайнă чухне вĕсене илсе каяççĕ те вĕсемпе практикăра усă курма вĕренеççĕ.

Кроса хатĕрленес ĕç Калининăри педучилищĕре те лайăх пырать.

Анчах профсоюзпа комсомолăн районри пуçламĕш организацийĕсем чылайĕшĕсем кроса хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕнех те туман-ха. Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсен 28 мăшăр йĕлтĕр тата туллимăр вăтам шкулăн 43 мăшăр йĕлтĕр пур. Кроса хатĕрленме пур условисем те çителĕклĕ. Апла пулин те, кунта комсомол организацийĕ вырăнтан хускалман, тренировкăсем те ирттермеççĕ.

Йĕлтĕрлĕ кроса ирттерме районра ятарласа инструкторсем 18 çын вĕрентсе хатĕрленĕччĕ. Вĕсем комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене кирлĕ пек практикăллă пулăшу памаççĕ.

Т. БЕЛОВ.

Вĕренӳри татах та пысăкрах пахалăхшăн

КАНАШ. (Хамăр корреспондентран). Çак кунсенче Канаш хулипе районĕнчи учительсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци пĕр ыйту—Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра партнă задачăсене учительсем мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе-яврĕ. Çак ыйтупа районри сутĕç пайĕн заведующийĕ Терентьев юлташ тата хулари сутĕç пайĕн заведующийĕ Васильев юлташ докладсем туса пачĕç.

Докладчиксем, пуринчен ытларах, шкулсен кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçуллăхри итогĕсемпе иккĕмĕш çурçуллăхри задачисем çинче чарăнса тăчĕç.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕ аслă отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче иртсе пырать. Çакă вăл сутĕç работникĕсенчен халăха çутта кăларас ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса çĕнетме ыйтать, вĕренӳ ĕçне пĕр чарăнмасăр, тикĕс те йĕркеллĕ туса пыма хушать. Çакна лайăх ăнланса илнĕ шкулсем кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулне ăнăçлă вĕçлерĕç тата фронта пулăшас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем турĕç. Семеновка, Çĕнĕ Шуртан, Çĕнĕ Юнтапа, Тури Юнтапа ялĕсенче шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарнă, вĕсене вĕренме кирлĕ условисем туса панă. Çавăнпа та ку ялсенчи ачасем шкула лайăх çӳреççĕ, вĕренӳре те аван ĕлкĕрсе пыраççĕ. Сăмахран, Семеновкăри пуçламĕш шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пыман ача пĕре те çук. Анаткас Татмăшри пуçламăш шкулти ачасенчен 97 проценчĕ пĕр начар паллăсăр вĕренет.

Юлашки вăхăтра Канашри вăтам шкулсенче те вĕренӳ пахалăхĕ лайăхланни палăрать. 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн пĕрремĕш «А», пĕрремĕш «Б» тата саккăрмĕш класĕнчи ачасем пурте «лайăх» тата «отлично» паллăсемпе вĕренеççĕ. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймакансен хисепĕ иккĕмĕш чĕрĕкре, пĕрремĕш чĕрĕкпе танлаштарсан, 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта 5 процент, 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта 8 процент чакнă. Ачасем занятисене çӳресси ăшĕ вăтам шкулĕнче те 90 процентран кая мар.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче районри чылай учительсем хăйсен пултарулăхпе таврăрлăхне кăтартрĕç. Конференци Ронгинский, Захарова, Мясников, Иванова (хулари 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул), Будяк, Ермошкина, Мофодьева (хулари 2-мĕш номерлĕ вăтам шкул), Максимова, Сергеева (Асхвари пуçламĕш шкул), Ахазова (Чакари пуçламĕш шкул), Петрова (Семеновкăри пуçламĕш шкул) юлташсен ĕçĕсене уйрăмăнах палăртса хăварнă. Çак учительсем, вĕренӳ ĕçне лайăх туса пынипе пĕрлех, агитаципе массăллă ĕçе тата фронта пулăшас ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ.

Конференци хулари 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем фронта пулăшас тĕлĕшпе тунă пысăк ĕçсене ырларĕ. Шкулти çамрăк патриотсем ку тараччен фронтовиксем патне 5 ещĕк парне янă, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли сахал мар ăшă тумтирсем, кĕпе-йĕмсем пухса панă. Шкул коллективĕ «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 1.500 тенкĕ укçа хывнă, учительсемпе служащисем укçалă-тенкĕлĕ лотерейăн билечĕсене илме уйăхри ĕçуккин фончĕн 20 процентĕ чухлĕ çырăннă. Вĕренекенсем пурте ПВХО значокĕн нормисене панă, вĕрентекенсем ПВХО инструкторĕсем ятне илнĕ.

Доклад тăрăх пынă прение 10 çын тухса каларĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем вĕренӳ ĕçĕн пĕрремĕш çурçуллăхĕнчи çитменлĕхсем çинче чарăнса тăчĕç, япăх ĕçлесен шкулсемпе учительсене критиклерĕç.

Палăртнă çитменлĕхсенчен чи пысăкки вăл—районри хăшпĕр ялсенче пурне те хут вĕрентес ĕç япăх пулса пыни. Районĕпе халĕ вăхăтра пурĕ 804 ача шкула çӳремест. Вăл шутран Шаккăлти вăтам шкула 104 ача, Анаткас Уçырмари, Аччакассинчи, Вăрăмпуçĕнчи туллимăр вăтам шкулсене 62—82 шер ача, Хирти Катекри тата Çĕнĕ Шелттемри пуçламăш шкулсене 14—15-шер ача çӳремеççĕ. Апла пулин те, çак шкул директорĕсем ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсене тумаççĕ, мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлсемпе лăпланса пурăнаççĕ.

Канашри виççĕ вăтам шкул тăрăх шкула çӳреме пăрахнисен хисепĕ пурĕ пĕрле 100 ачаран та иртет.

Хăшпĕр шкулсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасан ачасен хисепĕ питех те пысăк. Чакаçри тата Маякри пуçламăш шкулсенче пĕтĕм вĕренекенсенчен 20 процент, Аччакассинчи тата Анаткас Уçырмари туллимăр вăтам шкулсенче 16 процент, Вăрăмпуçĕнчи вăтам шкулта 31 процент вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймаççĕ.

Нумаях пулмасть районри пуçламăш шкулсенче арифметикăпа, тăван тата вырăс чĕлхисемпе çырулла тĕрĕслӳ ĕçĕсем туса ирттерчĕç. Çак предметсене вĕрентес ĕç чылай çĕрте япăх тăни палăрчĕ. Тĕрĕслӳ ĕçне çырнă вĕренекенсенчен арифметикăпа—25 процент, чăваш чĕлхипе—34 процент, вырăс чĕлхипе—40 процент «начар» паллăсем илнĕ.

Вĕренӳре уйрăмăнах Çĕнĕ Ахпӳртри тата Асхвари пуçламăш шкулсенчи Байдерякова па Игнатьева класĕсенче вĕренекенсем япăх пыраççĕ. Байдерякова класĕнче арифметикăпа — 31 ачаран 20-шĕ, Игнатьева класĕнче—чăваш чĕлхипе 28 ачаран 21-шĕ «начар» тата «питĕ начар» паллăсем илнĕ.

Тухса калаçакансенчен Альшиц юлташ (Канашри сутĕç пайĕн инспекторĕ) ĕçри çитменлĕхсем çинче чарăнса тăрса, учительсем методикăллă ыйтусемпе тата ачасен ăшшĕ-амăшĕсемпе пачах ĕçлемеснни çинчен асăрхаттарчĕ. Малашне ачасен ăшшĕ-амăшĕсем хушшинче ĕçлекен комитетсен ĕçне чĕртсе яма, вĕсен отчечĕсене тăтăшах итлеме кирлĕ пулать, терĕ вăл.

Райсовет исполкомĕн председателĕ Константинов юлташ районри тата хулари сутĕç пайĕсен работникĕсене вĕсем хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе пачах туса пыманшăн, ялти учительсене—вĕсем юлашки вăхăтра марксизм-ленинизм никĕсĕсене вĕренес ĕçе манса хăварнăшăн хытăн критиклерĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл шкулсенче тасалăхпа тирпейлĕхшĕн ытларах кĕрешме кирлине те астутарчĕ.

Районри учительсен январьти конференцийĕ вăйлă критикăпа, пысăк активлăхпа тата ĕçлĕн иртрĕ. Конференци шкулсен кăçалхи вĕренӳ çулĕн 1-мĕш çурçуллăхĕнчи çитĕнĕвĕсене çирĕплетсе, 2-мĕш çурçуллăхра тумалли ĕçсене палăртса хăварчĕ.

Т. ИВАНОВ.

Автозаводри çамрăксем чĕнсе калани çине ответлесе

Сталин ячĕпе тăракан заводри комсомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа стахановла вахтăна тăнă.

Чернухинпа Чесов юлташсен фронтовой бригадисем кулленхи заданисене 200-шер процент тултарса ĕçлеме обязательство илнĕ. Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне планран ирттерсе пĕрер вагон юсаса кăларма йышăннă.

Токарь-стахановец Григорьев юлташ, стахановла вахтăна тăрса, нормăна 225 процент тултарса ĕçлеме обязательство илнĕ.

13-мĕшпе 14-мĕш цехсенче ĕçлекенсен коллективĕ планпа пăхнинчен 5—7 процент ытларах продукци туса кăларма пулнă.

* * *

Автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине Милютински мехлеспунктра ĕçлекенсен коллективĕ хапăл туса кĕтсе илчĕ.

Автозаводри çамрăксен çырăвне сӳтсе явнă хыççăн рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

— Мухтавлă Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер. Пирĕн Хĕрлĕ Çар воинĕсем хĕссе пынипе тăшман шăлĕсене шатăртаттарса каялла чакать. Анчах вăл вăйлă-ха, кашни тĕмескерен тытса çăлăнса юлма тăрăшать. Çавăнпа пирĕн тылра хамăрăн ĕçпе Хĕрлĕ Çара пулăшмалла, — тет вăрман касакан Мубаракшин.

Унтан пурте пĕр кăмăллă пулса, 1942 çулти 1-мĕш квартал планне февралĕн 23-мĕш тĕлне 120 процент тултарма йышăннă.

Фасхутдинов, Шамсутдинов вăрман касакансем куллен икшер нормăран кая мар тултарма пулнă.

Чĕртаварсем парса тăракансен бригади (бригадирĕ Коляхин юлташ) ĕç тухăçлăхне, 1941-мĕш çултипе танлаштарсан, 50 процент ӳстерме обязательство илнĕ.

Шоферсем-двухсотниксем Чуворовпа Гаврилов юлташсем ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерме, горючине 30 процент перекетлеме сăмах панă.

Çавăн пекех коллектив çар ĕçне вĕренес, оборона ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе те конкретнăй обязательствăсем илнĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). Катуков юлташ командир пулса тăракан 1-мĕш Гвардейски Танковăй Бригадăн танкисчĕсем фашистла дивизисен чĕрĕ вăйĕпе техникине хăватлăн çĕмĕреççĕ. Ӳкерчĕкре çинче: Катуков юлташăн бригадинчи танксем тăшман çине тапăнса кĕреççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе çĕнĕрен вăйлатрĕç

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Паттăр Хĕрлĕ Çар туса пыракан пысăк çĕнтерӳсем Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ĕççыннисен производствăллă тата политикăллă активлăхне çĕнĕрен татах та ытларах çĕклерĕç. Колхозниксемпе служащисем хушшинче çĕршыва тата фронта ĕçлĕн пулăшасси вăйлансах пырать. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе çĕнĕ активлăхпа тытăнчĕç.

Январĕн 1-мĕш тĕлне районĕпе çĕнĕрен 636 тир, 95 килограмм ытла çăм, 92 мăшăр çăм перчатка, 30 мăшăр носки, 15 мăшăр çăм алшиш, 62 метр мануфактура, 11 мулаххай, 4 мăшăр çăматă, 2 кĕрĕк-пиншак, 4 шинел, 16 мăшăр кĕпе-йĕм тата ытти вак япаласем пухнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси уйрăмах колхозсенче пысăк хавхаланупа пулса пырать. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çак кунсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 38 тир, 18 мăшăр перчатка, 11 мăшăр çăм носки, 6 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм пухрĕç. «Великан» колхоз—45 тир, 7 килограмм ытла çăм, çăм перчаткăсемпе алшишсем, кĕпе-йĕмсем, «Красный партизан» колхоз членĕсем—16 килограма яхăн çăм, 11 тир, 4 фуфайка, 11 метр мануфактура, çăм перчаткăсемпе алшишсем, «День урожая» колхозăн колхозникĕсем—30 тир, 4 килограма яхăн çăм, 9 мăшăр çăм перчатка, портянкăсемпе носкисем тата «Победа» колхоз членĕсем — 10 килограмм çăм, 16 тир пухса пачĕç.

М. КУЗЬМИН
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Комсомолецсене колхозниксем хисеплеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Комсомолăн Уйкас-Асламасри «Искра» колхоз çумĕнчи организацийĕнче пурĕ 23 комсомолец. Комсомол организаци пухура çирĕплетнĕ план тăрăх ĕçлет. Комсомолецсен пухăвĕ вăхăтра тата йĕркеллĕ пулса пырать. Иртнĕ пухура Калинин юлташ Куйбышев хулинче комсомол активĕн пухăвĕнче каланă сăмаха сÿтсе-явнă. Çавăн пек докладсемпе калаçусем ирттерни комсомолецсен дисциплинине çирĕплетме пулăшать.

Организацинче член укçи пухас ĕç аван пырать. Комитет секретарĕ В. Николаев юлташ член укçине вăхăтра пухса перекет кассине хывать.

Çак комсомол организацийĕ пионерсемпе союзра тăман çамрăксене коммунистла воспитани парас енĕпе тăрăшса ĕçлет. Иртнĕ çулта ĕçре малта пыракан 7 çамрăка Ленинла-Сталинла комсомол ретне илнĕ.

Комсомолецсем вăрçă ĕçне вĕренеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем нормăсем парса 2—3 оборона значокĕ илнĕ. Оборона ĕçне вĕренмелли кружоксене Н. Васильевпа А. Кузнецов комсомолецсем ертсе пыраççĕ.

Çак кунсенче комсомолецсен пухăвĕнче Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен кроса хутшăнасси çинчен сÿтсе-явнă. Халь пур комсомолецсем те кроса хатĕрленеççĕ. Вĕсем йĕлтĕрпе çÿреме хăнăхаççĕ, походсем туса ирттереççĕ.

Организацире «Çулăм» ятлă стена хаçачĕ вăхăтра тухса тăрать. Унта комсомолецсен ĕçри çитменлĕхĕсемпе аван енĕсене кăтартса параççĕ.

Комсомолецсем чылайĕшĕсем фронта кайнă çынсен вырăнĕнче ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Н. Васильев — колхозра счетовод, А. Павлов — учетчик, Н. Арсентьев—1-мĕш бригадăн бригадирĕ, В. Николаев—избач, А. Кузнецов—колхоз тимĕрçи. Кузнецов юлташ пур ялхуçалăх машинисене те юсаса йĕркеленĕ. В. Кутузова—III-мĕш бригадăн бригадирĕ. Вăл ертсе пыракан бригада иртнĕ çулти ялхуçалăх çулне партипе правительство кăтартса панă срокра вĕçлерĕ. Халь килес çуракине большевикла кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Ку бригада уйхире 200 лава яхăн тислĕк кăларнă.

Комсомол организацийĕ тăван çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе те сахал мар ĕçленĕ. Комсомолецсем 18 тир, 3 килограмм çăм, чăлхасемпе перчаткăсем тата 335 тенкĕлĕх заем облигацийĕ панă. Комсомолка А. Димитриева 2 тир, 1 мăшăр перчатка тата 50 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, А. Степанова 2 тир, И. Зиновьев 1 килограмм çăм, В. Кутузова 1 тир, 1 перчатка пачĕç.

Пур ĕçре те аван тĕслĕхсемпе примерсем кăтартнăшăн колхозниксем комсомолецсене хисеплеççĕ, юратаççĕ.

Е. ИВАНОВ.

Вăрманти ĕçе организацилемен

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр). Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман-пунктĕнче ĕçлеме Çĕмĕрле, Элĕк тата Советски районĕсене çирĕплетнĕ. Çак районсенчи малта пыракан колхозсем вăрман хатĕрлев ĕçне активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем декабрь уйăхĕнчех бригадăсем организацилесе вăрмана ячĕç. Сăмахран, Элĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлевĕнче декабрĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа ĕçлет. Планпа палăртнă тăрăх ку колхозран вăрмана 6 çын тухмалла пулнă пулсан, кунта 7—8 çын тухнă. Çавăн пекех «Доброволец», «Комбайн» колхозсенчен те вăрманта начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем касса хатĕрленĕ йывăççене механизациленĕ çулсем патне турттарассине те лайăх организациленĕ.

Çĕмĕрле районĕнчен уйрăмăнах «Красный Октябрь» колхоз лайăх ĕçлет. Çак колхозран вăрманта çуран 10 çын, лашапа 10 çын ĕçлемелле, халĕ çуран 13 çын, лашапа 12 çын ĕçлеççĕ. Ку таранччен вĕсем чылай йывăç касса турттарнă ĕнтĕ. Колхозниксем ир пуçласа тĕттĕм пуличченех вăрманта. Вĕсем квартал планне срокчен тултарассишĕн ăмăртăва сарсах пыраççĕ. Вăрманта ĕçлекенсене ĕç тухăçне ÿстерме кирлĕ пур условисем те туса панă.

Анчах вăрман хатĕрлев ĕçне пур колхозсем те кирлĕ пек хутшăнман-ха. Уйрăм колхозсемпе ялсоветсен руководителĕсем, ĕç çине сÿрĕккĕн пăхнипе пула, паянхи куна та вăрмана ĕç вăйĕ паман. Çĕмĕрле районĕнчи Магарино ялсоветне кĕрекен колхозсем декабрь уйăхĕнче вăрманта пĕр кун та ĕçлемен темелле. План тăрăх декабрь уйăхĕнче ялсоветри колхозсен 195 кубометр касса хатĕрлемелле, 905 кубометр турттармалла пулнă, вĕсем пĕр кубометр та хатĕрлемен.

Кăçалхи çул вăрман хатĕрлевĕнче Мăн Улхаш ялсовечĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Единоличник хуçалăхĕсем декабрь уйăхĕнче вăрманта пĕр кун та ĕçлемен. «Красноармеец» колхозран куллен çуран 20 çын, лашапа 16 çын тухса ĕçлес вырăнне, ялан çуран 8—10 çын, лашапа 10—15 çын тухса ĕçлеççĕ. Паянхи куна Кăмашари «Красный пахарь», «1-ое Мая», Мыслецри «Ударник» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те вăрман хатĕрлевне çирĕппĕн тытăнман, вĕсем ĕç вăйне кирлĕ чухлĕ памаççĕ, çавна пула план тулса пымасть.

Вăрман пунктĕнче Элĕк районĕнчен çуран 250 çын, лашапа 180 çын ĕçлемелле. Вĕсен çак сезонра 22 пин кубометр касса хатĕрлесе, 20 пин кубометр турттармалла тата механизациленĕ çулсем патне 7 пин кубометр турттарса кăлармалла. Паянхи куна илсен, вĕсен ĕçĕ питех те япăх пырать. Декабрь уйăхĕнче пĕр колхоз та хăйне панă плана тултарман. Уйрăмăнах Тукташ, Хирлепуç, Крымзарайка, Ефремкасси ялсовечĕсем япăх ĕçлеççĕ, вĕсен графикĕ пурнăçа кĕрсе пымасть.

Çаксем çинчен районри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, паллах, пĕлсе тăраççĕ. Анчах ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе сахал мерăсем йышăнаççĕ.

Декабрĕн юлашки кунĕсенче механизациленĕ вăрманпунктĕнче ĕçлекенсен хисепĕ 350—400 çынна çитрĕ. Юлашки вăхăтра талах та хутшăнса пырать. Çапах ĕç вăйĕ çителĕклĕ теме çук-ха, мехлеспункт декабрь уйăхĕн планне нихăш енĕпе те тултараймарĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ пирки те çавнах каламалла. Норма тăрăх кашни кун 2 фестметр хатĕрлемелле, 2,9 фестметр турттармалла пулсан, чылайĕшĕсем нормăна тултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен вăрманта ĕçлекенсен ĕç кунне тĕрĕс организацилемен. Хăшпĕр çĕрте ĕçе ирхине 9—10 сехетре тухса, каç пуличченех таврăнаççĕ. «Красноармеец» колхоз членĕсен ĕç кунĕ 6—7 сехетрен иртмест, лашапа ĕçлекенсем кунне пĕр хут турттарса пухаççĕ те вĕсен ĕç кунĕ те вĕçленет. Çапла ĕçлесе вĕсем нормăна 40 — 50 процент çеç тултараççĕ.

Халĕ вăрманта ĕçлеме çанталăк лайăх тăрать. Кашни колхозăн çав кунсемпе туллин усă курса, панă заданине срокчен тултармалла. Ăна тума пирĕн условисем пур, ĕç вăйĕпе туллин усă курни çеç кирлĕ.

Х. ЛИСИН.

Районри потребкооперацин ĕçĕсем

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корреспонденчĕ). Потребитель кооперацийĕсен районри союзĕ юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи пек урăхлатса çĕнетрĕ: аппаратра ĕçлекенсен йышне пĕчĕклетрĕ, таварсем кÿрсе килессине ÿстерчĕ, сельпосене ертсе пырассине вăйлатрĕ. Райпотребсоюз председателĕ Садовников юлташ, унăн заместителĕ Мурзуков юлташ сельпосенче час-часах пулса, вырăнти суту-илÿ ĕçне конкретно ертсе пыраççĕ. Вĕсем лайăх ĕçлекенсене хавхалантараççĕ, юлса пыракансене пулăшаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерсе, йăнăшсене тÿрлетсе пыраççĕ. 1941 çулăн вăрринче Шаккăл сельповĕ ытла та япăх ĕçлесе пынă. II-мĕшпе III-мĕш кварталсенчи таварçаврăнăш планĕсене тултарайман, пай укçине пухассипе, членсен йышне ÿстерессипе юлса пынă, финанс дисциплинине юхăнтарса янă. Ноябрĕн 1-мĕш тĕлне ку сельпо тăрăх 3 пин тенкĕ тăкак пулнă. Çакна кура Райпотребсоюзри работниксем Шаккăл сельповĕн ĕçне юсаса тата чĕртсе ярасси çине хытă çаврăнса пăхнă. Чи малтанах сельпори ертсе пыракан çынсене улăштарнă. Правлени председателĕ вырăнне çĕнĕ çынна, суту-илÿ ĕçĕнчи активиста Г. Ярусов юлташа лартнă. Малалла ăна ĕçре пулăшса, кăтартусем парса тăнă. Халĕ Шаккăл сельповĕ хăйĕн ĕçне хăвăрт лайăхлатса пырать. Малтан пулнă тăкаксене витсе, декабрĕн 1-мĕш тĕлне 658 тенкĕ тупăш пачĕ. IV-мĕш кварталта пай укçи пухассипе, члена кĕртессипе Шаккăл сельповĕ районра 1-мĕш вырăна тухрĕ. Юлашки вăхăтра кăна 4500 тенкĕ пай укçи пухнă, 45 çынна члена явăçтарнă.

Çĕнĕ Шелттем сельповĕн правлени председателĕ Г. Захаров юлташ çав вырăнта 4 çул хушши ĕçлет. Захаров юлташ хăçан мĕнле таварпа суту-илÿ тумаллине, ĕççыннисем валли мĕн-мĕн кÿрсе килмеллине лайăх пĕлсе тăрать, финанс дисциплинине çирĕп тытать.

Сельпора 6 отделени. Пурте, пĕтĕм çитменлĕхсене шута илмесен, япăх мар ĕçлеççĕ. Таварçаврăнăш планне кашни уйăхрах тултарса пыраççĕ, пай укçине пухсах, членсен йышне ÿстерсех пыраççĕ. Канашри отделени пуринчен те лайăх ĕçлет. Таварçаврăнăш планне вăл яланах ирттерсе тултарать, пысăк тупăш кÿрет. Отделенири продавец А. Николаев таварсене сутса пĕтермесĕр вырттармасть, лавкана таса тытать, илекенсемпе культурăллă калаçать. Таварçаврăнăш планне çĕнĕ Шелттемри отделени те (продавец И. Матвеев юлташ) тултарса пырать.

Анчах районра япăх ĕçлекен сельпосем те пур. Асхва сельповĕ III-мĕш кварталти таварçаврăнăш планне тултарайман, 1-мĕш кварталти ĕçсем те мухтанмаллах мар. Сельпо тăрăх 1805 тенкĕ растрата шутланать. Правлени председателĕ Степанова юлташ ĕçе тÿрлетсе ярассишĕн, вырăнти таварсене сутса тупăш илессишĕн тăрăшмасть. Райсоюз работникĕсен Асхва сельповĕ çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Пай укçи пухассипе тата члена кĕртессипе юлашки вăхăтра Вăтапуç сельповĕ те ĕçе сÿрĕклетрĕ. Унăн отделенийĕсенче 4-мĕш кварталта члена 4 çынна кăна илнĕ, пай укçине 900 тенкĕ çеç пухнă.

Потребитель кооперацийĕн тепĕр пысăк ĕçĕ—ялхуçалăх продукчĕсемпе таварĕсене хатĕрлесси. Ку тĕлĕшпе вара райпотребсоюзăн ĕçсем начартарах. Ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлемелли плана, пĕтĕмĕшпе илсен, тултарайман. Пахча-çимĕç хатĕрлемелли плана çеç ирттерсе тултарнă. Çăмарта, чăх-чĕп пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Вăтапуç тата Асхва сельповĕсем юлса пыраççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Агитаци пирки

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Хальхи вăхăтра халăх хушшинче политикăллă агитаци ĕçне тĕплĕн туса пыма кирли пуриншĕн те паллă.

Çакна шута илсе, пирĕн ку вăхăтра нумай агитколлективсем çине тăрса, активлăн ĕçлеççĕ. Çавăн пек лайăх ĕçлекен агитколлектив пур çĕрте политикăпа хуçалăх ĕçĕсем те ăнăçлă пулса пыраççĕ. Кăна уйрăм районсемпе ялсовечĕсенчи ĕçсенчен курма пулать. Агитколлектив лайăх ĕçлекен ялсенчи колхозниксем государствăна памалли парăмсене вăхăтра татаççĕ, хуçалăхпа политикăллă кампанисене активлăн хутшăнаççĕ, Хĕрлĕ Çара тата фронта пулăшас ĕçе хавасланса тăваççĕ тата ыт. те. Агитколлективсем начар ĕçлекен е пачах ĕçлемен вырăнсенче ку тĕлĕшпе вара ĕçсем пачах урăхла тăраççĕ.

Кунта эпир пĕр активлă агитатор та курăнман Турхан ялсовечĕ (Первомайски р-н) çинчен калаçшăн. Иртнĕ çул Турханта колхоз клубĕ лайăх ĕçлетчĕ. Клуб колхозниксем хушшинчи политикăллă-массăллă агитацин пункчĕ пулса тăратчĕ. Халĕ, клуб заведующийĕ пулнă С. Алексеев юлташ кайнăранпа, колхоз клубĕ хăйĕн ĕçне манчĕ. Клуб çумĕнче е ялсовечĕ çумĕнче агитколлектив пулмалла. Турханта вăл çук. Массăллă-политикăллă ĕçе кунта никам та йĕркелеме тăрăшмасть. Çакна пула хуçалăхпа политикăллă кампанисем те Турхан ялсоветĕнче начар пыраççĕ. Тĕслĕхе илсен, укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарасси кунта çителĕксĕр иртрĕ.

Мĕншĕн капла начар ĕçлеççĕ-ха Турхан ялсоветĕнче? Е кунта лайăх агитатор пулма пултаракан çынсем çук-и вара? Ĕçлеме пултаракан çынсем кунта сахал мар. Пĕр вăтам шкултах 16 учитель. Анчах та учительсем ялти обществăллă ĕçе нит те сахал хутшăнаççĕ. Чылайĕшĕсем шкулти ĕçĕнчен пуçне урăх нимĕн те тумаççĕ, халăх хушшинчи хисеплĕ ĕçрен пăрăнса тăраççĕ.

Тăван çĕршывра, фронтра тата тĕнчере çав тери паллă ĕçсем пулса пыраççĕ. Турхан ялĕнчи культурăллă вăйсен, ялисполкомăн çав ĕçсемпе событисем çинчен кашни колхознике ăнлантарса парассишĕн тăрăшмалла. Апла пулсан, ялта халех çирĕп агитколлектив организацилемелле. Парти райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн те Турхан ялсоветĕнче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелесси çине лайăхрах çаврăнса пăхмалла.

А. К.

Парне янă

Шупашкарти «Красный молот» артельри рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 263 тенкĕлĕх парне янă. Посылка ăшне вĕсем табак тултарнă 21 енчĕк, 20 сăмса тутри, аялтан тăхăнмалли 10 кĕпе, 20 тетрадь, 23 карандаш, 20 конверт, 8 килограмм конфет-премĕк тата ытти япаласем те хунă. Парнепе пĕрле Калинин фронтĕнчи боецсемпе командирсем тата политработниксем патне артельре ĕçлекенсен коллективĕ çыру янă. Унта вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте татах та пысăк çĕнтерÿсем тума суннă. Хăйсен коллективĕ 1941 çулта тăрăшса ĕçлесе, çулталăк планне ноябрĕн 1-мĕш тĕлнех тултарни çинчен пĕлтернĕ. Иртнĕ çулта обязательствăран ирттерсе 83,7 пин тенкĕлĕх продукци панă. Стахановецсем сменăра нормăна 2—3 хут тултарса ĕçлеççĕ. 1942 çулта рабочисем татах та лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ

Н. РАЕВ.

КОЛХОЗСЕМ ÇУРАКИ УМĔН

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялсоветне кĕрекен «Красная звезда», «Исаково» тата «Красный пахарь» колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ ÿссе пырать. Колхозниксем пĕтĕм ĕçе фронта, хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çара пулăшассипе çыхăнтарса туса пыраççĕ. Фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçе хĕрарăмсем тăчĕç. Иртнĕ çулсенче ĕçе тухман ватă çынсем кăçал колхоз производствинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. «Краснăй звезда» колхозри хисеплĕ ватă старик сене колхоз ĕçĕнче иртен пуçласа каçченех курма пулать. Вĕсем кашни 250—300-шер ĕçкунĕ турĕç.

Степан Павлов колхозник нимĕç фашисчĕсен çарне çапса салатма Хĕрлĕ Çара куллен ĕçпе пулăшса пырать.

— Пĕтĕр вĕсем, ирсĕрсем! Çынçнен Гитлерăн тата унăн вăрă-хурахла çарĕн шăпи тулса килет,—тет колхозник С. Павлов. Кирек мĕнле ĕçе те тимлĕн туса, С. Павлов колхозник государство умĕнчи обязательствăсене яланах вăхăтра татать, ĕçре хăйĕн хастарлăхĕпе ытти колхозниксене лайăх тĕслĕх кăтартса пырать.

«Красная звезда» колхозра ытти колхозниксем те ĕçе ĕлĕкхинчен нумай хут лайăхрах тата хăвăртрах туса пыраççĕ. Çакнах ытти колхозсенче те курма пулать. Колхозниксем пур ĕçе те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн хăвăрт тăваççĕ.

Исаково ялсоветĕнчи колхозсем халĕ çуракине хатĕрленеççĕ. «Красная звезда» колхоз уя 175 лав тислĕк кăларчĕ, вăрлăх фончĕсене тасатса, кĕлетсене вырнаçтарса хучĕ, уйра юр тытма шитсем çыхаççĕ. Кашни колхозник хăйĕн килĕнче колхоз уйхирне тăкма кĕл, чăх-чĕп тислĕкĕ пухать.

«Исаково» колхоз та уя 225 лав тислĕк кăларчĕ, ялхуçалăх машинисене юсаттарма, колхозăн урапа тата сÿсмен-хăмăт тавраш не юсама ятарласа мастерской уçрĕ. Çак кунсенче вăл мастерской çĕнĕрен 12 çуна туса кăларчĕ, çуна юсарĕ. Пăрçа-ясмăк йышши тырăсен вăрлăх фондне колхозниксем пĕрчĕн суйлаççĕ.

«Красный пахарь» колхоз авăн çапас ĕçпе каярах юлчĕ. Халĕ колхозниксем ăнса пулнă тырра тирпейлесе çапассишĕн тăрăшаççĕ. Кашни кун итем çинче тул çутăличчен тухса сĕм тĕттĕмччен авăн çапаççĕ.

Я. НИКИТИН.

ÇĔНĔ ÇИТĔНÿСЕМ

ВĂРНАР. Районри «Трудовик» артель коллективĕ хăйĕн 1941 çулти планне декабрĕн 18-мĕш тĕлне ытлашшипех тултарнă. Çул вĕçленнĕ тĕле артель планран ирттерсе 84.230 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Артельри рабочисем хăйсен нормисене икшер-виçшер хут тултарса ĕçлеççĕ.

Катка-пичкесем тăвакан цех мирлĕ вăхăтра катка-пичкесем тата кĕреçесем тунă пулсан, халĕ унта Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йĕлтĕрсем тăваççĕ. Цех коллективĕ кашни уйăхрах хăйĕн программине темиçе хут ирттерсе тултарать. Рабочисем хушшинче ăмăрту нихăçанхинчен ытла сарăлнă. Вĕсем, нормăсене тултарнипе пĕрлех, пахасортлă продукци туса кăларассишĕн тăрăшаççĕ. Кожалев, Корнев, Антонов юлташсем ĕç нормине яланах 250—300 процент таран тултараççĕ. Çак юлташсене кура, ытти рабочисем те тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Çĕвĕ çĕлекен цехра ĕçлекен Малиновскăй, Бабекышева, Григорьева юлташсем куллен хи ĕç нормине 200—250 процент таран тултарса пыраççĕ.

Плана тултарса пынипе пĕрлех, артель коллективĕ Хĕрлĕ Çара та лайăх пулăшать. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 3 мăшăр çăматă, пиншак, алшăлли т. ыт. те панă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç халĕ те пырать. Кусăр пуçне вĕсем оборона фондне 890 тенкĕ тата «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 520 тенкĕ укçа панă.

Халĕ рабочисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине татах та пысăкрах çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн пĕрпĕрнипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. ЗАХАРОВ.

Анат-Кĕнер вăтам шкулĕнче

ИШЛЕЙ. Анат-Кĕнер вăтам шкулĕнче вĕренекенсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче вĕренÿ пахалăхне хăпартма, çирĕп дисциплинăллă пулма тăрăшаççĕ. Вĕсем шкула пĕр сиктермесĕр çÿрессишĕн, лайăх вĕренессишĕн ăмăртаççĕ. М. Бондарев, П. Шуркин, М. Магазеева пур предметсемпе те отлично вĕренеççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕренекенсем çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 800 тенкĕ ытла укçа хыврĕç. Уйрăмăнах 10-мĕш «Б» класра вĕренекенсем нумай укçа-тенкĕ пухрĕç. Вĕсем кашни 10-шар тенкĕ парса, бронепоезд тунă çĕре 200 тенке яхăн хывнă. Воскресниксенче çывăхри колхозсенче ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен тупăшне (укçа çине куçарсан, 800 тенке яхăн) танксен соединенине тунă çĕре панă. Çавăн пекех укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сырăнса илес ĕçе те вĕренекенсем активлăн хутшăнчĕç. 8—10-мĕш классенче вĕренекенсем хăйсем кăна 300 тенке яхăн сырăннă.

Ачасем оборона ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Аслă классенче вĕренекенсем штыкпа çапăçма, противогазпа усă курма, винтовкăран тĕл пеме, аманнисене малтанхи пулăшу пама вĕреннĕ, пурте ПВХО значокĕн нормисене панă. Халĕ шкулта йĕлтĕрçĕсен командине тунă.

Шкулта тухса тăракан стена хаçачĕсем вĕренÿ ĕçĕнче пысăк пулăшу параççĕ. Унта лайăх вĕренекенсен ĕçĕсене кăтартаççĕ, кая юлакансене критиклеççĕ.

Г. РАЗУМОВ.

МЕДСЕСТРА

Вăл çамрăк-ха, çирĕм пĕр çулта çеç. Çапах та унăн кунçулĕнче сахал мар пулнă асран каймилли кунсем. Çирĕм пĕррене çеç çитнĕ пулин те, унăн биографийĕ хисеплĕ те мухтавлă событисемпе пуян.

Марфа Яковлевна Калинински районри Тури Карачура ялĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕне астумасть вăл. «Граждăн вăрçинче вилнĕ» тенине çеç илтнĕ вăл тăван амăшĕ çинчен.

Кунсем, çулсем малаллах шунă. Ялти тулллимар шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл, вунтăватă çулхискер, 1934 ç. Вăрнарти ветеринари техникумне вĕренме кĕрет. Çав техникумрах комсомол ретне кĕрет.

Çамрăк комсомолка, шкулта отлично вĕренсе пынипе пĕрлех, агитатор-пропагандист пулса ĕçлет. Часах вăл техникум çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацин секретарĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Марксизм-ленинизм вĕренĕвĕпе куллен-кун хĕçпăшалланса пынă, партипе комсомол ĕçĕсене большевикла хастарлăхпа пурнăçласа пынă çамрăк комсомолкăн организаторла пултарулăхне ÿстерĕçемĕн ÿстерет. Вăл вуншар хĕрачасене комсомол ретне явăçтарать, вĕсене вĕренÿре те, ĕçре те пулăшса пырать.

1938 çулти çуркунне, ветеринари техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Марфа Яковлевна ВЛКСМ Вăрнар райкомĕн секретарĕ пулса тăрать. Çав вăхăтрах тата Шупашкарти педагогика институтĕнче заочно вĕренме тытăнать.

— Ĕçлени—вĕренме, вĕренÿ—ĕçлеме нихăçан та чăрмантармасть. Ĕçе—вĕренÿрен, вĕренĕве—ĕçрен уйăрма çук.

1939 çулти кĕркунне пединститутăн иккĕмĕш курсне вĕренме кĕрет. Çак вăхăтра та вĕренÿрен уйăрăлмасăрах Марфа Яковлевна аэроклуба çÿреме тытăнать.

— Анчах...,—хуйхăллăнрах калать вăл,—чирлесе ÿкни мана вĕçевçĕ пулма та, вĕренĕве малалла тăсма та кансĕрлерĕ.

Чĕрери ĕмĕте сÿрĕлтерменни, вĕренес тата ĕçлес шанчăка çухатманни этеме иксĕлми вăй парать. Çак пахалăхсене вĕренÿре тата ĕçре мĕн ачаранпах пухса пынă хĕр хăй ĕмĕчĕсене çĕттермест, пурнăçри шанчăкне çухатмасть.

Пирĕн мухтавлă паттăр Хĕрлĕ Çар 1940 çулта белофинсен çарĕсене çапса салатрĕ. Хаяр кĕрешÿре белофинсенчен тытса илнĕ çĕнĕ территори çине пирĕн партипе правительство хамăрăн патриотсене куçса кайма ирĕк пачĕ.

Аслă хĕрÿллĕрех ĕç—çавăнталла чунĕ туртăнакан Марфа Яковлевна хăйĕн Анфиса ятлă йăмăкĕпе Социализмлă Советлă Карело-Финн Республикине куçса кайнă. Кунта та вăл хăйĕн организаторла пултарулăхне кăтартать. «Красная Карелия» колхоза организацилес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлет, колхоз çумĕнче комсомолăн пуçламĕш организацине пуçарса ярать, хăех организацин секретарĕ пулса ĕçлеме тытăнать.

Çулăхи хĕрÿ ĕçсенче—утă çулнă çĕрте тата тырă вырнă чухне активлăн ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Курнокски райкомĕ ăна хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Уборкăна ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, кĕркунне Марфа Яковлевна Петрозаводскри университета иккĕмĕш курса вĕренме кĕрет. Унта та вăл часах студентсемпе студенткăсем хушшинче хăйĕн активлăхне палăртать. Вăл, ĕçе—вĕренÿпе, вĕренĕве—ĕçпе çыхăнтарма юратаканскер, производствăран уйрăлмасăр медсестрасен ултă уйăхлă курсĕнче вĕренме тытăнать, хăйĕн хĕр тусĕсене те вăл çак курса явăçтарать.

* * *

Нимĕç фашисчĕсемпе белофинсем пирĕн ирĕклĕ пурнăçпа пуранакан çĕршыв çине тапăнсан, Марфа Яковлевна хăйĕн хĕр тусĕсемпе пĕрле, медсестра пулса фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокне лекет. Партипе комсомол вĕрентсе ÿстернĕ хĕр çĕршывăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пыракан хаяр çапăçусенче аманакан боецсене пулăшма малти позицисене каять. Умра та, хыçалта та снарядсем çуралнине пăхмасăр, вилĕм пульлисем пуç çинченех шăхăрса иртнинчен хăраса тăмасăр, вăл вăрçă хирĕнче юн юхтарса выртакан боецсене малтанхи пулăшу парать; вĕсене вилĕм аллинчен хăтарса хăварассишĕн нимĕнле хăрушлăх умĕнче те чарăнса тăмасть.

— Пĕррехинче çакăн пек ĕç пулса иртрĕ,—çÿçенерех калама тытăнчĕ Марфа Яковлевна.—Л. станцишĕн пыракан хаяр çапăçура пирĕн чаçсем, нимĕçсемпе белофинсен вăрă-хурахла войскисен атакисене аркатса тăкса, çĕнĕ рубеж йышăнчĕç. Эпир, университетра та пĕрле вĕреннĕ Аня ятлă медсестрапа иксĕмĕр, каç пулас умĕн аманнă боецсене малтанхи пулăшу пама çапăçу пынă вырăна çитрĕмĕр. Аня татах та малтарахри позицисене кайрĕ, эпĕ аманнă тăватă боецăн суранĕсене çыхса юлтăм. Аманнă боецсенчен пĕри мана хăйсенчен инçех мар вилеймесĕр выртакан нимĕç офицерĕ çинчен пĕлтерчĕ. Ăна штыкпа чиксе пăрахнă пулнă. Боец мана çав офицерăн суранне çыхма тата документчĕсене кăларса илсе штаба çитерсе пама хушрĕ. Çĕлен хăйне ырă тунăшăн та инкек кÿрет теççĕ... Ун пирки мана хамăрăн аманнă боец та каласа асăрхаттарчĕ.

Сывлăшне йывăррăн çавăрса илчĕ те, Марфа Яковлевна курайманлăх туйăмĕпе вĕресе тăракан кăмăлне хăпартса, малалла калама пуçларĕ:

— Пуçран аманнă çĕлен хÿрипе çапать, тесе каланă ваттисем. Çавăн пекех килсе тухатчĕ çак фашист офицерĕнчен те. Аманнă нимĕç офицерĕ çумĕнче пупă кобур çеç асăрхарăм, нимĕнле хĕçпăшал тавраш те курăнмарĕ. Документчĕсене кăларса илтĕм те куçнепуçне тискеррĕн çавăрса пăрахнă офицерăн суранĕсене çыхма тытăнтăм. Вăл пуçне çĕкленĕ пек пулчĕ. Сасартăк тăшал сасси янраса кайрĕ. Сысна пуçлă офицер тĕшĕрĕлсе анчĕ те куçĕсене хупрĕ.

«Хăтăлтăр-и, сестра?»—ыйтрĕ аманнă красноармеец, хуллен ман патăма шуса çитсе.

Мĕн пулса иртнине эпĕ тÿрех тавçăрса та илеймерĕм. Вара аманнă красноармеец çапла ăнлантарса пачĕ: «Эсир çак çĕлен суранне çыхнă чухне вăл, хăй айне пытарса хунă револьверне алла илсе, сире ĕнсерен тĕллерĕ. Анчах, хăвăрах туятăр, эпĕ офицертан маларах тĕллесе пеме ĕлкĕртĕм...» Эпĕ аманнă красноармеецсене пурне те çăлса хăвартăм, вĕсем те мана фашист пульли сăхассинчен хăтарчĕç.

Çапăçу фронтĕнче малти позицисенче пулса, Марфа Яковлевна икĕ хутчен аманнă. Вилĕме хирĕç кĕрешекен сестра вуншар боецсен пурнăçне çăлса хăварнă.

* * *

Пĕр уйăх каялла Марфа Яковлевна Н-ски госпитальтен тăван ялне таврăннă. Врачсем ăна пĕр çулталăк хушши канма хушнă.

— Анчах çак хĕрÿллĕ тапхăрта епле ĕçсĕр ларатăн? Пур майпа та фронтпа тыла пулăшмалла. Фашистла ирсĕр çĕлен-калтасене çапса салатсан тин канăç пулма пултарать,—тет вăл.

Халĕ вăл ВКП(б) Калинино райкомĕн кадрсен отделĕнче ĕçлет.

Райкомра сывпуллашнă чухне вăл пире çакăн пек наказ пачĕ:

— Эсир ман çинчен мĕн те пулин çырас тетĕр пулсан, республикăри комсомолкăсемпе çамрăк хĕрачасене пурне те ман ятпа çакăн пек чĕнсе çырăр:

Комсомолкăсем, çамрăк хĕрачасем,—пурте медицина ĕçне вĕренсе медсестрасем пулма тăрăшăр. Производствăра уйрăлмасăр медсестрасен курсне вĕренме çÿрĕç. Тăван çĕршывăн мухтавлă паттăр боецĕсене фронтра пулăшасси чи хисеплĕ те чыслă ĕç!

Максим ЯСТРАН.

Учительсем çар ĕçне вĕренеççĕ

ÇĔРПУ, («Чăваш Коммуни» корр.). Хĕллехи каникул кунĕсенче Шуртавăшри тулллимар вăтам шкулăн çурчĕ пуш лармасть. Ку çуртра вĕренÿ пункчĕ ĕçлет. Хĕрлĕ Çар ретне тăма тивĕçлĕ учительсем 110 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне вĕренме декабрĕн 30-мĕшĕнче тытăннă.

Вĕренÿ занятийĕсем ирхине 6 сехет те 20 минутăра пуçланса каçхине 11 сехетчен пыраççĕ. Учительсем занятисене пĕр сиктермесĕр çÿресе, çар ĕçне тимлĕн вĕренеççĕ. Дисциплинăна лайăх тытса пыраççĕ. Кашни боец хăйне хăй Хĕрлĕ Çар ретĕнчи пек дисциплинăллăн тыткалама тăрăшать.

Вĕренÿ пункчĕн командирĕсемпе политрукĕсем те учительсем. Вĕсем занятисене практикăллă ĕçсемпе çыхăнтараççĕ. Боецсене боевой обстановкăна пăллаштарса, занятисене уйра е вăрмансенче ирттереççĕ. Çакă вăл боецсене вăрçăра пулакан йывăрлăхсене çĕнтерме хăнăхтарать.

Вĕренÿ пунктĕнче политикăллă-массăллă ĕç тĕп вырăнта тăрать. Политрук—Пĕкĕрвар вăтам шкулĕн директорĕ Петров юлташ паттăр Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри çĕнтерĕвĕсем çинчен кашни кун информаци туса ирттерет. Стена хаçачĕ, подразделенисенче боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Районри учительсем, хĕллехи каникул кунĕсенче çар ĕçне отлично вĕренсе, Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕрленеççĕ.

Италия çулталăк çурă вăрçнин хурлăхлă результачĕсем

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Фашистла Италия вăрçа хутшăнса çулталăк çурă вăрçнин итогĕсем çинчен «Таймс» хаçат статья пичетлесе кăларнă. Çав статья авторĕн шухăшĕпе, Италия поражени тӳснин тĕп сăлтавĕ—Муссолини пуçласа янă вăрçă авантюрине масса ырламанни пулса тăрать.

Çулталăк çурă вăрçса,—тесе çырать хаçат,—Италин 250.000 çынни тыткăна лекнĕ, çур миллион çынна Германие ĕçлеме янă, 500.000 çын Греци тата Югославин патриочĕсене пусарса тăрас йĕрĕнчĕкле ĕçе туса пырaççĕ.

Итали халăхĕ выçă та сивĕ хĕле пурăнса ирттерет. Пурне те кирлĕ таварсене тупма çукпа пĕрех, тата вĕсем ытла та начар. Продовольстви памалли нормăна чи сахал виçе таран чакарнă. Вăрçăпа çар промышленноçĕн те чĕр-тавар тата рабочисем çитменнипе хăйĕн ĕçне чакарса пыма тивет. Государство расхочĕсем тăватă хут ӳссе кайнă. Италири нумай çемьесен хăйсен вилнĕ е аманнă çыннисем пирки макăрма тивет, мĩçе çын вилнипе аманнине вара влаçсем пур майпа та пытарса усраççĕ.

Çак асапсене вăрçăри ăнăçусем нимĕн чухлĕ те саплама пултарайман. Италия, ăна пурте пĕлеççĕ, колониллĕ владенисен чиккисене улăштарма ыйтнăччĕ. Чиккĕсене халь чăнахах та ĕнтĕ улăштарнă, анчах та Италишĕн киллĕшӳллĕ мар.

Юлашкинчен «Таймс» хаçат: Италире çĕршыва çавăн пек положение кĕртсе ӳкернĕ фашистла пуçлăхсене тарăхни ытларах та ытларах палăрса пырать, тесе палăртать.

Захватчиксем хушшинчи ĕçсем

Германипе Итали захватчикĕсем хушшинчи отношенисем начарланнăçемĕн начарлансах пыраççĕ. Германин Салоникири çар губернаторĕ Италин хут укçисене çӳреме чарнă. Африкăри кафесенче Италипе Германи салтакĕсем пĕр-пĕринпе тăтăшах çапăçнă пирки нумай кафесенче халĕ «Германи çарĕ валли çс!» тесе пысăк саспаллисемпе çырса çапнисене курма пулать.

(ТАСС).

Германи самолечĕ Итали пароходне путарнă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 16-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Женеври корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Римран килнĕ çын çапла каласа панă: нумаях пулмасть Пирея çывăхĕнче Германи бомбардировщикĕ Италин грузовой пароходне путарнă. Çав пароходăн капитанĕ Грецие Итали салтакĕсем валли илсе пынă продовольствие нимĕççене пама килĕшмен пулнă.

Финсен хаçачĕ хурланса çырни

Финсен «Каумен социалдемократен» хаçачĕ Финляндире халăх йышне ӳстерес тĕлĕшпе пуçласа янă кампани çинчен хурланса çапла çырать: «Хальхи вăхăтра, тин çуралнă ачасене кипкепе чăркас вырăнне хутпа чăркама тивнĕ тапхăрта, ача амăшĕсем нимĕнле пулăшу та илме пултарайман вăхăтра, пирĕн ача-пăчасем выçăпа вилеççĕ, çавăнпа та халĕ халăх йышне ӳстерес тĕлĕшпе шавлани вырăнлă мар». «Карьяла» хаçат, Финляндире тырпул тĕлĕшĕнчен положени питĕ йывăррине кăтартса парса, финсем йывăр вăхăтра усă курнă авалхи йăлана каялла таврăма — çăнăха йывăç хуппипе хутăштарса çăкăр пĕçерме тытăнма сĕнет.

(ТАСС).

Франци Германин шăнса аманнă салтакĕсене илсе пынă

Нумаях та пулмасть Марселе Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен Германин шăнса аманнă 2.000 салтакне илсе пынă. Вĕсенчен нумайĕшĕсенне тăм илсе янă пирки аллине е урине татнă. (ТАСС).

Германи çарĕн командованийĕнчи улшăнусем

СТОКГОЛЬМ, январĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕн высший командованийĕн представителĕ ютçĕршыв хаçачĕсен Берлинри корреспонденчĕсем умĕнче официальнăй йĕркепех çапла пĕлтернĕ: Германи çарĕн аслă командованийĕнче чăнах та пысăк улшăнусем пулчĕç, тенĕ. Çав улшăнусене вăл «хăйне уйрăм оперативнăй плансене пула туна планлă куçарусем» тесе каланă. Çавнашкалах тата командовани представителĕ çакна пĕлтернĕ: «Германин вăрçă ĕçĕнчи планĕсене уçса кăтартас мар» тесе, вырăнтан кăларнă тата вĕсен вырăнне лартнă генералсен ячĕсене халĕ пĕлтерместтĕр, тенĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Советсен çар авиацийĕнчи командир Англире зенитнăй установкăсенчен пĕринче инçене виçмелли приспособлени мĕнле ĕçленипе паллашать.

Албани партизанĕсен хăюллă ĕçĕсем

Албанирен килнĕ журналист Албани патриочĕсен Итали оккупанчĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ çинчен каласа панă. Албани халăхĕн анлă массисем,—тенĕ вăл, — оккупантсене хирĕç пыракан таса кĕрешĕве хутшăнаççĕ. Çав кĕрешӳре уйрăмах Албанире ĕлĕк полици начальникĕ пулнă Мухвасино Байрато отрячĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Унăн отрячĕ, çурçĕр-хĕвелтухăç Албанире кĕрешекенскер, кашни кун тенĕ пекех Италин обозĕ çине тапăнать тата Итали салтакĕсене пĕтерсе тăкать. Юлашки вăхăт хушшинче Албани патриочĕсем Кудревпа Валония хушшинчи нефтепровода пăсса йĕркерен кăларнă.

(ТАСС).

Ослори çивчĕ лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, январĕн 16-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Осло хулинче темиçе хутчен те диверсиллĕ пысăк актсем пулса иртнĕ. Норвеги столицинче Германие хирĕçле движени анлăн сарăлса кайни гитлерла администрацие питĕ хытă шиклентерет. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Ослори полици начальникне Ульберна Германи полицин аслă чиновникĕсемпе калаçма питĕ васкавлăн Берлина чĕнсе илнĕ. Ульберн Гиммлерпа тĕл пулса калаçнă чухне—«ăнсăртран восстанимĕн пулас пулсан» хулари стратегиллĕ тĕп пунктсене хӳтĕлемелли тĕплĕ план туса хатĕрлеççĕ пулмалла.

Норвегин телеграф бюровĕ çапла пĕлтерет: январĕн 10-мĕшĕнче Осло хулинчи гитлерла администрацин районсенчи руководителĕсен черетсĕр конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференцире Тербовен сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Норвеги столицинчи хăрушă лару-тăру çинчен кăтартса панă. «Шанчăксăр элементсем» тĕлĕшпе çирĕп мероприятисем йышăннă.

Гитлерла террор Чехословакире

Чехословакин Нью-Иоркра тухса тăракан бюллетенĕ гитлеровецсем Чехословакире варварла хуçаланни çинчен темиçе çĕнĕ факт кăтартса парать. Гитлерла влаçсем çĕнĕ декрет пичетлесе кăларнă. Çав декрет тăрăх, шкулта вĕренсе пĕтернĕ хыççăнах вĕренекенсен пурин те уйрăм пункта кайса регистрациленмелле. Ку пунктсенчен вара вĕсене, Германи влаçĕсем кăтартса панă тăрăх, ирĕксĕрлесе ĕçлеме яраççĕ. Чехословакири пур гимназисене те хупса пĕтернĕ. Чехословакире Германие хирĕç тăвакан саботажсен хисепĕ çавтери нумайланса кайнă пирки, ун çинчен ĕнтĕ Германи влаçĕсен те уççăнах çырма тивет. Мĕнпур çĕршывĕпех Чехословаки халăхне хăратакан плакатсем çыпăçтарса пĕтернĕ. Çакнашкал плакатсенчен пĕринче аллинче пĕчĕк ача тытса тăракан йĕрекен хĕрарăма сăнласа кăтартнă. Плакат айне çапла çырнă: «Унăн упăшкине саботажа хутшăннăшăн наказани панă». Çавнашкалах пур хаçатсенче те халăха: саботаж тунăшăн çавтери хытă айăплаççĕ, тесе асăрхаттараççĕ.

(ТАСС).

Гитлеровецсем Греци халăхне вĕлерсе пĕтереççĕ

Тури Торагипе Анатри Торагн районĕсенче гитлерла оккупантсем темиçе яла, çав ялсенчи çынсем нимĕç салтакĕсем çине тапăннă тесе, пĕтерсе хунă.

Германин Салоникирен Меселонгион ялне пынă салтакĕсем хĕрарăмсемпе ача-пăчасене ялтан хăваласа кăларнă та çакăн хыççăн ялти 200 арçынна пĕр çын юлмиччenех вĕлерсе пĕтернĕ. Хăйсен çакнашкал бандитла актне нимĕçсем, ку ял партизансене активлăн пулăшса пынă, тесе ăнлантарса панă. Лахана ялĕнче Германин икĕ шоферне вĕлернĕшĕн таврăнса, 13 хресчене çакса вĕлернĕ. Крит утравĕ çинчи пĕр ялта та, ял çывăхĕнче Германи парашютисчĕн виллине тупнă хыççăн, çавнашкалах хăрушă ĕç пулса иртнĕ. Лакки ялĕнчи çынсем, Германи тискерлĕхĕнчен хăтăлас тесе, тусем çине кайса пытаннă. (ТАСС).

Франци çар сучĕсем хуçаланаççĕ

СТАМБУЛ, январĕн 16-мĕш. (ТАСС). Францирен пĕлтернĕ тăрăх, Франци çар сучĕсемпе специальнăй судсем Германие хирĕçле саботажсем, диверсиллĕ актсем тунăшăн тата Германи салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлерме хатĕрленнĕшĕн питĕ нумай приговорсем йышăннă. Парижри специальнăй суд правительствăна хирĕçле пропаганда тунăшăн 5 çынна пысăк срокхăха тĕрмене хупса лартмалла приговор йышăннă. Тулузăра, çав сăлтавсемпех айăпласа, 25 çынна 3 çултан пуçласа 20 çул таран каторгăра ĕçлеттермелле суд тунă. Германи салтакĕсене вĕлерме хатĕрленнĕшĕн Парижра çар трибуналĕ, официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, 2 француза персе вĕлермелле приговор йышăннă. Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Францин аслă сучĕ çумĕнчи специальнăй тинĕс-çар трибуналĕ моряксен темиçе группине вăрттăн ĕçсем тунăшăн 10 çултан пуçласа 15 çул таран тĕрмене хупса усрамалла приговор йышăннă. Çавнашкалах тата Марсельре арестленĕ 19 морякăн ĕçĕ тĕлĕшпе те часах приговор йышăнасси çинчен пĕлтернĕ.

Ливи фронтĕнчи ĕçсем

Нимĕçсен танксем çителĕклĕ мар

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Ливири специальнăй корреспонденчĕ çакна пĕлтерет: Ливи фронтĕнчи вăрçăн тĕп ĕçĕсем хальхи вăхăтра Нарса Брега çывăхĕнче пыраççĕ (Нарса Брега Эль-Агейларан 30 мильăна яхăн хĕвелтухăçнерех). Асăннă районра Германи генералĕ Роммель хирĕç тăрса çапăçмалли çĕнĕ центр тăвать, кунта çĕнĕрен авиаци вăйĕсем ярать.

Анчах та тĕнĕл держависем хăйсене англичансем кăнтăр енчен тапса çапасран шикленеççĕ пулмалла,—тесе çырать корреспондент.—Роммель аллинче танксем татах та пур-ха. Çав хупăрах вăл Триполи енчен çĕнĕ танковăй чаçсем илессине ĕненterсе пара кан нимĕнле паллă та çук. Анчах та пире çакă кăна паллă: нимĕçсен Ливире хальхи вăхăтра питех те кивелсе кайнă конструкциллĕ танксемпе те усă курма лекет.

Англи порчĕсенчен пĕринче. Ӳкерчĕк çинче: Америкăран килнĕ оборудованипе çар снаряженине пушатаççĕ.

Хĕрлĕ Çар валли аш-какай

ШАМАРША. Çĕрпӳ районĕнчи Туçи ялсоветне кĕрекен «Цивильстрой» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем республикăри мĕнпур ĕçсыннисене чĕнсе каланине районри пур колхозри колхозниксемпе колхозницăсем те хапăл туса йышăнчĕç.

Асанкасси ялсоветне кĕрекен «Юлташ» колхозри колхозница, красноармеец арăмĕ Елизавета Кормакова, «Цивильстрой» колхозникĕсен пуçарăвне ырласа çапла каларĕ:

— Антив, пирĕн упăшкасем фашистла вăрă-хурахсене хирĕç çине тăрсах çапăçчăр. Эпир те хамăр ĕçсемпе çав ĕçех тăвар—фашистла ирсĕр çĕленкалтасене хăвăртрах пĕтерсе тăкма пирĕнтен фронт мĕн ыйтнине парсах тăрар, хамăрăн обязательствăсене срокчен тултарар. Хĕрлĕ Çарпа промышленноçа кирлĕ продуктсене, япаласене тата чĕртаварсене пурне те çителĕклĕ парса тăрасси—вăл хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи патриотла парăм, ăна эпир чыслăн пурнăçлатпăр. Эпĕ «Цивильстрой» колхоз членĕсен питĕ те кирлĕ пуçарăвне чĕререн ырлатăп.

Çак сăмахсене Елизавета ĕçпе çирĕплетрĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли вăл пĕр така, пĕр чăх, пĕр тир, ăшă çĕлĕк, минтер пичĕ тата 2 килограмм махорка пачĕ. Пухăва пынă ытти колхозниксемпе колхозницăсем, цивильстроевецсен чĕнĕвне пĕр кăмăллăн йышăнса, Хĕрлĕ Çара кашниех пĕрер вылăх самăртса пама пулчĕç. Колхоз хăйĕн ферминчен 15 сурăх, 4 сысна самăртма хупрĕ. Уйрăм колхозниксем С. Губетдуллинпа Н. Кузьмин пĕрер сурăх, И. Сесюкин пĕр путек, О. Судаков икĕ чăх самăртса пама пулчĕç, И. Кузьмин колхозник 10 килограмм аш парать.

Районри ытти колхозсем те тăван Хĕрлĕ Çар валли аш-какай хатĕрлес ĕçе тимлесех тытăнчĕç. «Заря» колхоз цивильстроевецсен чĕнĕвне пухура сӳтсе явнă хыççăнах 10 сысна самăртма хупрĕ. Çак колхозри колхозниксемпе колхозницăсем кашниех пĕрер сурăх е пĕр-ик чăх, хур самăртса пама пулчĕç.

Ф. КРАСНОВ.

* * *

ВĂРНАР. Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçма тăван Хĕрлĕ Çара тăтăшах пулăшса тăраççĕ. Вĕсем оборона фондне тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу тылай хывреç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тата апатçимĕç продукчĕсем нумай пачĕç.

Халĕ колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли аш-какай резервĕ хатĕрлеме тытăнчĕç. «Гигант» колхоз Хĕрлĕ Çар валли 10 сысна, 10 сурăх тата 130 чăх ӳстерет, вĕсем самăрлса çитсенех вĕсене Хĕрлĕ Çар валли параççĕ. Хирпуç ялсоветĕнчи «Победа» колхоз членĕсем те Хĕрлĕ Çар валли 5 сысна, 50 чăх, пĕр сурăх самăртма тытăнчĕç.

Уравăшри «1-ое мая», Киров ячĕпе тăракан тата «Трактор» колхозсем Хĕрлĕ Çар валли 10 сысна, 15 сурăх, 100 чăх самăртма тытăннă.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Иккĕмĕш тĕлпулу

Чăваш писателĕсен союзĕ çар чаçĕсенче литературăллă вечерсем ирттерес тĕлĕшпе хăйĕн ĕçĕсене вăйлатса пырать. Январĕн 16-мĕшĕнче писательсемпе боецсен иккĕмĕш тĕлпулăвĕ пулса иртрĕ. Боецсемпе командирсене тата политработниксене пĕтĕм чăваш писателĕсен ячĕпе Чăваш совет писателĕсен союзĕн правлени председателĕ И. С. Тукташ саламларĕ, писательсене — политрук Костовецкий юлташпа политрук заместителĕ Седов юлташ саламларĕç.

П. Г. Григорьев юлташ «СССР-ти халăхсен туслăхĕ, чăваш халăхĕн авалхипе хальхи пурнăçĕ çинчен» доклад туса пачĕ. Чăваш писателĕсем: орденоносец Н. И. Шелепи, поэт Стихван Шавлы тата поэтеса К. С. Арсенева юлташсем хăйсен сăввисене вуласа пачĕç.

Писательсемпе боецсен иккĕмĕш тĕлпулăвĕ питех те ăшă кăмăллă обстановкăра иртрĕ.

„Илемлĕ литература" альманахăн çĕнĕ номерĕ

Çак кунсенче «Илемлĕ литература» альманахăн 1(9-мĕш) кĕнеки производствăна каять.

Проза пайĕнче Л. Н. Толстой çырнă «Севастополь калавĕсенчен» «Севастополь декабрь уйăхĕнче» ятлă калавĕ, Мопассанăн «Мадмуазель Фифи» тата чăваш писателĕсем çырнă калавсем пичетленеççĕ.

Драматурги пайĕнче Сталинла премии лауреачĕ К. Тренев çырнă «Любовь Яровая» драмăн юлашки пайĕсем (пуçламăшĕ иртнĕ №-те), Е. Никитинăн «Тăван çĕршывшăн» ятлă пĕр актлă пьеси т. ыт. те пулаççĕ.

Поэзи пайĕ те чылаях пуян. Унта И. Тукташ, Ухсай Яккăвĕ, Н. Евстафьев, Вл. Бараев, В. Ахтубай, С. Шавлы поэтсен паянхи кун ыйтăвĕпе çырнă сăввисем пичетленеççĕ. Пуринчен ытла Вл. Бараевпа В. Ахтубайăн фронтран янă сăввисем интереслĕ.

Альманахра критикăпа библиографи пайĕ те, архивран текен уйрăм та пур.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарнин итогĕ

Фашизма хăвăртрах çапса çĕмĕрме пирĕн Хĕрлĕ Çара хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыма кирли çинчен Сталин юлташ Октябрь уявĕн кунĕсенче тунă докладра тĕплĕн каласа панă.

Аслă çулпуç фронта пулăшас ĕçе вăйлатма чĕнсе калани совет çĕршывĕнчи халăхсен çĕнтерӳ ялавĕ пулса тăчĕ.

Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе единоличниксем тата совет интеллигенцийĕ, укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕçе хутшăнса, нумайĕшĕсем укçине те çийĕнчех тӳлесе татрĕç. Çакă вăл пирĕн совет çыннисем хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕпе вăрçă расхочĕсене витме çине тăрсах тăрăшнине кăтартса парать.

Пирĕн Чăваш республикинчех лотерея билечĕсене 5.808 пин тенкĕлĕх сарнă. Çак ĕçе уйрăмах Елчĕк, Çĕрпӳ, Вăрнар, Куславкка, Улатăр районĕсем пысăк ăнăçлăхпа туса ирттерчĕç. Кунта ĕççыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне лайăх йĕркеленĕ.

Финанс работникĕсенчен нумайĕшĕсем, хальхи вăхăтра тăракан задачăна ăнланса илсе, хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи условисем ыйтнă пек улăхлатса çĕнетнĕ. Вĕсем лотерея билечĕсене сарнипе пĕрлех укçине пухас ĕçе те организациленĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар районĕсем лотерея билечĕсемшĕн укçа пухса çитерчĕç.

Çак кунсенче чылай районсенче лотерея билечĕсемшĕн укçа пухса çитереççĕ. Шăхасан районĕнче лотерея билечĕсене 141 пин тенкĕлĕх сарса, укçине 120 пин тенкĕ пухнă. Чкаловски районра 100 пин тенкĕлĕх сарса, 89 пин тенкĕ пухнă, Елчĕк районĕнче 167 пин тенкĕлĕх сарса, 130 пин тенкĕ пухнă.

Госкредитăн пулăшу комиссийĕсен тата профсоюзăн фабрикăсемпе заводсенчи комитечĕсен, çавăн пекех пĕтĕм совет общественноçĕн задачи — лотерея мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен пĕтĕм ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса парса, çав ĕçе пĕр çын юлмиччен явăçтарасси пулнă. Лотерея билечĕсене çийĕнчех укçа тӳлесе илес ĕçе йĕркелемелле. Февралĕн 15-мĕш тĕлне лотерея билечĕсемшĕн укçа пухса çитермелле, мĕншĕн тесен мартăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр лотерейăн вылявĕ пулса иртет. Пĕтĕмпе 1,5 миллион вылявă пулать. Вĕсенчен нумайрахĕшĕсем укçаллă вылявсем пулаççĕ.

Япала вылявне кил хушшинче кирлĕ хаклă япаласем кĕреççĕ. Каракультен çĕленĕ хĕрарăм пальтисем, хаклă тирсем тата ытти те.

Билет çине япала вылявĕ тухсан, унăн вырăнне япали хакĕ чухлĕ укçан та илме пулать.

Хăшпĕр районсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕçе япăх ирттереççĕ. Йĕпреç, Канаш, Октябрьски, Первомайски, Çĕмĕрле районĕсенче лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе те, укçине пухас тĕлĕшпе те сӳрĕк ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра финанс планне тултарас ĕçре кая юлни пулмалла мар.

Халĕ финанс органĕсем умĕнче укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсемшĕн срокченех укçа пухса çитерес задача тăрать. Çав задачăна ăнăçлăн пурнăçлама вырăнти совет тата парти организацийĕсен финанс работникĕсене çителĕклĕн пулăшса пыни кирлĕ.

А. МИХАЙЛОВ.
Сберкассăсемпе госкредит Управленийĕн начальникĕн заместителĕ.

Лотерея билечĕсемшĕн укçа тӳлеççĕ

КАНАШ. Районри предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсемпе промысла артелĕсенче укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илесси сарăлсах пырать. Январĕн 1-мĕш тĕлне районĕпе пурĕ 401 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине 117 пин тенкĕ тӳленĕ.

Лотерейăн билечĕсене уйрăмах колхозниксем хавасăн çырăнса илни Хĕрлĕ Çара татах та пысăк çĕнтерӳсем тума пулăшассишĕн пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем çине тăрса тăрăшнине кăтартать. Кармали ялсоветĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем лотерея билечĕсене пурĕ 4.241 тенкĕлĕх илнĕ. Асхва ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ хĕм» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 2.350 тенкĕлĕх, Шаккăл ялсоветĕнчи «Искра» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем 2-шер пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Ку колхозсенче лотерея билечĕсен укçине те пĕтĕмпех пухса панă. Çавăн пекех Сухайкасси ялсоветĕнчи ĕçхресченĕсем те 6 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех тӳленĕ.

Лотерея билечĕсене сарасси вагонсем юсакан заводри рабочисемпе служащисем хушшинче аван пырать. Январĕн 2-мĕш тĕлне заводри рабочисемпе служащисем хушшинче лотерея билечĕсене пурĕ 167.280 тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран вагонсем юсакан завод çумĕнчи 23-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем 12.200 тенкĕлĕх çырăннă.

«Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене çырăнса илмен пĕр çын та ан юлтăр»,—çакăн пек задача лартнă хăйсем умне чугунçул çинче ĕçлекенсем. Депори рабочисем 12.820 тенкĕлĕх çырăннă. Чугунçулăн 5-мĕш дистанцинче ĕçлекен работниксем хушшинче лотерея билечĕсене 12.080 тенкĕлĕх сарнă.

Аш-какай комбинатĕнче ĕçлекенсенчен лотерея билечĕсене кашни çынах пĕр уйăх ĕçукĕн 15 процентĕ чухлĕ çырăннă, укçине те пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Т. И.

Чăваш республикинчи мамăк тирлĕ тискер кайăксем

Чăваш республикинчи вăрмансенче мамăк тирлĕ тискер кайăксем нумай. Сĕнтĕр районĕнчен пĕлтернĕ тăрăх Шăшкар ялĕн çывăхĕнче сăсар нумай ĕрчесе кайнă. Иртнĕ çулсенче сăсарсене тытма чарнă пулнă. Кăçал сăсарсем нумай ĕрчесе кайнипе пула вĕсене тытма ирĕк панă.

Тăвай районĕнчи кӳлĕсенче шывра пурăнакан хаклă тирлĕ кайăк—шашкă (выхухоль) йышланса кайнă.

Пур çĕрте те вакшасем тĕл пулаççĕ. Хирсенче пăсарасем нумай. Чăваш республикинчи сунарçăсем халĕ çавнашкал мамăк тирлĕ тискер кайăксене тытаççĕ. Иртнĕ çулта мамăк тирсем хатĕрлес плана чылай ирттерсе пултарнă.

В. СЕМЕНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Для заключения страхования вызывайте на дом страхового инспектора или агента рэй(гор)фино.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакт заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 627 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.